им. М. Горь...
№...

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Март
15
ВЫРСАРНИКУН
№ 54 (8963)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Пирĕн чи таса тивĕç—совет çĕршывĕнчи халăхсен пĕрлĕхĕпе туслăхне малалла тĕреклетсе пырасси, нумай нациллĕ Совет государствине тĕреклетсе пырасси пулать. Хамăр çĕршыври халăхсем туслă пурăннă чухне пирĕншĕн шалти тата тулашри нимĕнле тăшмансем те хăрушă мар.

(Г. М. Маленков юлташ сăмахĕнчен).

Тăван çĕршыва малалла вăйлатса пырар!

Аслă çулпуçăмăра тата учителĕмĕре Иосиф Виссарионович Сталин юлташа юлашки çула ăсатнă хурлăхлă кунсем нихçан та асран каяс çук. Сталин юлташ вилни пирĕн партишĕн, совет халăхĕшĕн, мĕнпур этемлĕхшĕн питех те йывăр, каялла таврăрма çук пысăк çухату пулчĕ.

Çак кунсенче пирĕн çĕршыври кашни çын Совет Союзĕнчи халăхсем В. И. Ленинпа И. В. Сталин ертсе пынипе утса тухнă çула аса илчĕ. Ленинпа пĕрле Сталин юлташ Коммунистсен хăватлă партине туса çитĕнтернĕ. Вăл, Ленинпа Сталин çул кăтартса пынипе, Российăри рабочи класпа ĕççыннисене царизма хирĕç кĕрешме çĕкленĕ. Ленинпа пĕрле Сталин юлташ пирĕн рабочи класа Октябрьти Социализмла Аслă революци çĕнтерĕвĕ патне илсе çитерĕ, граждан вăрçипе ют çĕршывсен интервенцийĕ вăхăтĕнчи хаяр кĕрешӳре тăшмансене çĕнтерсе Октябрьте кĕрешсе илнисене сыхласа хăварнă, вара çĕршывăн халăх хуçалăхне юсас ĕçе ăнăçлă туса пыма тытăннă.

1924 çулта В. И. Ленин вилнĕ хыççăн, унăн генилле соратникĕ И. В. Сталин партие, пĕтĕм совет халăхне социализм çулĕпе ертсе пырас ĕçе хăй çине илчĕ. Вăл хавхалантарнипе, куллен-кун ертсе пынипе совет халăхĕ, халăхăн мĕнпур тăшманĕсене пĕтерсе, хуçалăха ăнăçлă юсаса çитерчĕ, çĕршыва индустриализацилессине, ялхуçалăхне коллективизацилессине пурнăçларĕ, хамăр çĕршывра социализмла общество туса çитерчĕ. Халăх хуçалăхĕ пур енĕпе те вăйланни, социализм çĕнтернĕ никĕс çинче совет халăхĕн мораллĕ-политикăллă пĕрлĕхĕ пулса тăни Совет Союзĕн оборона пултарулăхне тĕреклетрĕ. Çавăнпа ĕнтĕ совет халăхĕпе унăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем, генилле полководец Сталин юлташ ертсе пынипе, Аслă Отечественнăй вăрçăра фашистла вăрă-хурахсен çарĕсене çĕмĕрсе тăкма, этемлĕхе фашизм чуралăхĕн хăрушлăхĕнчен çăлса хăварма пултарчĕç.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче совет халăхĕ вăрçă ишĕлтернĕ хуçалăха юсарĕ, малалла аталантарса пычĕ, социализмран майĕпен коммунизма куçас тапхăра кĕчĕ.

Аслă Сталин, Коммунистсен партийĕ, Совет правительстви ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнипе пĕтĕм совет халăхĕн пурнăçĕ ĕлĕкхипе танлаштарма çук нумай лайăхланчĕ, культура шайĕ нумай ӳсрĕ. Халăх пурнăçне малалла лайăхлатса пырассишĕн тăрăшса ĕçлесси — пирĕн партин пĕтĕм ĕçĕнче чи аслă закон пулса тăрать.

Пирĕн чăваш халăхĕ те çак кунсенче нихçан асран кайми çулпуçăмăр Сталин юлташ ертсе пынипе утса тухнă çула аса илчĕ. Ленинпа Сталин хавхалантарса ертсе пынă Октябрьти Социализмла Аслă революци çĕнтернине пула чăваш халăхĕ, Российăри ытти мĕнпур халăхсем пекех, ĕмĕрхи пусмăртан хăтăлса ирĕке тухрĕ, Совет Союзĕнчи пĕртан праваллă халăхсенчен пĕри пулса тăчĕ, хăйĕн автономиллĕ республикине туса хучĕ, хуçалăхпа культурăна çӳлĕ шая хăпартрĕ. Совет влаçĕн çулĕсенче чăваш халăхĕ совет халăхĕсен тăванла çемйинче пурăнакан, коммунизмла общество тăвас ĕçре хастарлă ĕçлекен социализмла наци пулса тăчĕ.

Совет халăхĕ вилĕмсĕр Сталин ертсе пынипе, Коммунистсен партийĕн политикине пурнăçласа пынипе тунă çĕнтерӳсем калама çук пысăк, вĕсем пĕтĕм тĕнче историйĕнче палăрса тăраççĕ. Анчах Сталин юлташ пире халиччен тунă çитĕнӳсемпе кăпăланса лармалла мар, умра тăракан пысăк задачăсене пурнăçлассишĕн иксĕлми вăй-хăватпа кĕрешмелле, тесе вĕрентнĕ. Çĕршыври рабочисем çак кунсенче, Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçсе, Тăван çĕршыва малалла вăйлатма производствăри заданисене, кварталти тата çулталăкри плансене ирттерсе тултарассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешеççĕ. Вĕсен тĕллевĕ—сталинла пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен пурнăçласси. Рабочи класпа пĕр шухăшлă пулса, колхоз хресченĕсем ялхуçалăхĕ умне партин XIX-мĕш съезчĕ кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлассишĕн — мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерессишĕн, выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстернĕ вăхăтрах унăн тухăçлăхне ӳстерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Секретарĕ тата ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ аслă Сталин тупăкĕ умĕнче каланă сăмахра çапла каларĕ:

«Пирĕн чи таса тивĕç—социализмла Тăван çĕршыва малалла чечеклентерсе пырасси пулать. Пирĕн социализмла промышленноçа, хамăр çĕршывăн кăвачĕпе çирĕплĕхĕн тĕревне, пур майсемпе те аталантарса пымалла. Пирĕн колхоз стройне пур майсемпе те тĕреклетсе пымалла, совет çĕршывĕнчи мĕнпур колхозсене малалла çĕклесе чечеклентерсе пымалла, рабочи класпа колхоз хресченĕсен союзне çирĕплетмелле».

Çак сăмахсем пĕтĕм совет халăхĕ тупа туни пулаççĕ. Асран кайми аслă Сталин тупăкĕ умĕнче тупа тунине пурнăçлассишĕн совет çыннисем вăя шеллемесĕр тăрăшса ĕçлесе пырĕç.

Партипе Совет правительстви чĕнсе калани çине ответленĕ май республикăри предприятисемпе колхозсенче ĕçри çĕкленӳ ӳссех пырать. Канашри вагонсем юсакан завод коллективĕ çулталăкра вагонсем юсамалли плана декабрĕн 21-мĕшĕнче тултарма, çулталăкри планран ирттерсе миллионшар тенкĕлĕх продукци туса кăларма пулнă. Завод коллективĕ илнĕ обязательствăна пурнăçлассишĕн хастарлă ĕçлет. Çак кунсенче Улатăрти атă-пушмак фабрикинче пур цехсем те, пур рабочисем те задание ирттерсе тултараççĕ, чи лайăх продукци туса кăларма тăрăшаççĕ.

Çакăн пек хыпарсем республикăри предприятисенчен килсех тăраççĕ.

Йĕпреç машина-трактор станцийĕнчи механизаторсем вăя шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Вĕсем тракторсене тата кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсаса пĕтерчĕ. Халĕ комбайнсене юсаççĕ. Механизаторсем хăйсем ĕçлекен колхозсенче вăйлă тырпул туса илме, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре колхозсене ытларах пулăшма пулаççĕ. Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем аслă Сталина асăнса ирттернĕ пухура кăçал ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсене питĕ лайăх туса ирттерме, хăйсен колхозне организацилпе хуçалăх енĕпе малалла тĕреклетсе пыма обязательство илнĕ.

Пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле пирĕн республикăри ĕççыннисем те Тăван çĕршыва малалла вăйлатассишĕн çапла тăрăшса ĕçлеççĕ. Хальхи вăхăтра партин вырăнти организацийĕсем умĕнче çакăн пек задача тăрать: рабочисемпе, колхозниксемпе, интеллигенципе тачăрах çыхăнса, предприятисен производство планĕсене ирттерсе тултарассишĕн, вăрман хатĕрлĕмелли плана пĕтĕмпех тултарассишĕн, МТС-семпе колхозсем çуракине тĕплĕн хатĕрленсе çитмелле тăвассишĕн социализмла ăмăртăва вăйлатмалла.

Пирĕн хăватлă Тăван çĕршыв çĕнĕ çитĕнӳсем патне шанчăклăн малалла утать. Пирĕн коммунизмла обществăна пĕтĕмпех туса çитерме мĕн кирли пурте пур. Совет обществи коммунизм патнелле çĕнтерӳллĕн утса пырассине чарса лартма пултаракан вăйсем тĕнчере çук!

Ленинăн—Сталинăн аслă ĕçĕ пĕтĕмпех çĕнтерессе патне — малалла!

Иосиф Виссарионович Сталина пытарнă кун хурлăхлă митингра Г. М. Маленков, Л. П. Берия тата В. М. Молотов каланă сăмахсене пичетлесе кăларни

Государствăн политикăллă литература издательстви Иосиф Виссарионович Сталина пытарнă кун 1953 çулхи мартăн 9-мĕшĕнче Хĕрлĕ площадьре хурлăхлă митингра Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов каланă сăмахсене уйрăм кĕнекесем туса пичетлесе кăларнă.

Кĕнекесене 3-шер миллион экземпляр кăларнă.

К. Маркспа Ф. Энгельс произведенийĕсем чăвашла

Научнăй коммунизмăн никĕсне хываканĕ, пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн учителĕпе çулпуçĕ Карл Маркс çырнă произведенисем çĕр чăмăрĕ çинчи мĕнпур çĕршывсенче саралнă.

К. Маркс произведенийĕсене чăвашла та пичетлесе кăларнă. К. Маркспа Ф. Энгельс çырнă вилĕмсĕр произведени — «Коммунистсен партийĕн манифесчĕ» 1932—1949 çулсем хушшинче пурĕ 14.500 экземпляр пичетленсе тухнă.

Чăваш АССР-ĕнчи Кĕнеке палати пĕлтернĕ тăрăх, К. Маркспа Ф. Энгельс произведенийĕсене чăвашла куçарса пурĕ 27.500 экземпляр пичетлесе кăларнă.

Пĕтĕм вăй-хăвата хамăр çĕршывра коммунизм туса çитерес аслă ĕçе хурар!

★

Аслă Сталинăн ĕçĕ шанчăклă алăра

КИЕВ, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Советлă Украина столицинчи ĕççыннисем аслă çулпуçăн, туспа учителĕн Иосиф Виссарионович Сталинăн ятне хисеплесе асăнаççĕ. Мускавра И. В. Сталина пытарнă кун Хĕрлĕ площадьре Г. М. Маленков, Л. П. Берия тата В. М. Молотов юлташсем каланă сăмахсене пичетленĕ хаçатсене пиншер агитаторсем предприятисенче, учрежденисенче, шкулсенче вуласа параççĕ.

Ĕнер агитаторсем аслă çулпуçăн шанчăклă соратникĕсем тухса каланă сăмахсем çинчен «Транссигнал» заводри механически цехри рабочисемпе калаçусем ирттернĕ. Цехри парторганизаци секретарĕ Педан юлташ совет халăхĕ аслă Сталин кăтартса панисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе темиçе хут ытларах вăй хурса ĕçлени çинчен, совет çыннисем партин Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçни çинчен каласа панă.

Калаçу вăхăтĕнче фрезернăй группăн бригадирĕ Щечкин юлташ çапла каланă:

— Пирĕн шухăш-кăмăла хуçма пултаракан вăй çук! Аслă Сталин хăйĕн пĕтĕм пурнăçне панă ĕç шанчăклă алăра пулнине эпир пĕлетпĕр.

«Красный экскаватор» заводри слесарь-сборщик Кулешов юлташ çапла каланă:

— Эпир, экскаватор тăвакансем, коммунизмăн сталинла стройкисен заказĕсене пурнăçлассишĕн тата ытларах вăй хурса ĕçлеме тупа турăмăр.

Завод коллективĕ март уйăхĕнче Каховка гидроэлектростанцийĕн строителĕсем валли продукцие срокчен пилĕк кун маларах ăсатма пулнă.

Сталинград гидроэлектростанцине тунă çĕрте хĕллехи вăхăтра та земснарядсемпе пĕрмаях ĕçленĕ. Земснарядсемпе 1,5 миллион кубометр ытла çĕр чавса кăларнă. 1005-мĕш номерлĕ земснаряд экипажне Атăлпа Дон хушшинчи канала тунă çĕрте ĕçленĕ Геннадий Бовш ертсе пырать. Земснаряд коллективĕ ĕç нормине ирттерсе тултарать.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): земснаряд начальникĕ Г. Бовш, старши механик Д. Федоров тата инженер-электрик А. Онищенко земснарядпа ĕçлемелли çĕнĕ вырăна пăхаççĕ.

В. СОБОЛЕВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

И. В. Сталин произведенийĕсене Совет Союзĕнчи халăхсен чĕлхипе кăларни

ТБИЛИСИ. Грузин ССР государство издательстви И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле ĕçне грузин чĕлхипе иккĕмĕш изданипе кăларнă.

Совет влаçĕ çулĕсенче Грузире И. В. Сталин произведенийĕсене 249 хутчен 7 миллиона яхăн экземпляр пичетлесе кăларнă. И. В. Сталин сочиненийĕсен 13 томне кăларнă.

МИНСК. Белорус ССР государство издательстви И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенине белорус чĕлхипе тепĕр хут пичетлесе кăларнă. Çак кĕнекене 15 пин экземпляр кăларнă.

ХАБАРОВСК. Хабаровскри кĕнеке издательстви И. В. Сталин юлташăн ĕçĕсене çурçĕрти халăхсен чĕлхипе кăларма тытăннă. И. В. Сталин юлташ Пĕтĕм Союзри колхозник-ударниксен пĕрремĕш съездĕнче 1933 çулхи мартăн 19-мĕшĕнче каланă сăмаха коряк чĕлхипе кăларнă. Çак сăмахах çитес вăхăтра чукча чĕлхипе кăлараççĕ. Коряк тата чукча чĕлхипе И. В. Сталин юлташ «ССР Союзĕн Конституци проекчĕ çинчен тунă доклада», «Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче 1937 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕнче тата 1946 çулхи февралĕн 9-мĕшĕнче каланă сăмахсене» тата ыттисене те кăларма хатĕрлеççĕ.

ХУСАН. И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă классикăллă произведенийĕпе Тутар республикинчи вуншар пин ĕççынни интересленет. Тутар чĕлхипе кăларнă 45 пин экземпляр кĕнекене магазинсенче кĕске срокра сутса пĕтернĕ. Тутар АССР государство издательстви И. В. Сталинăн генилле ĕçне тепĕр хут пичетлесе кăларнă.

ЛЬВОВ. Облаçри ĕççыннисем И. В. Сталинăн вилĕмсĕр ĕçĕпе питĕ интересленеççĕ. Облаçри хуласемпе ялсенчи ĕççыннисем «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенине 100 пин экземпляр ытла туяннă. И. В. Сталин партин XIX-мĕш съездĕнче каланă сăмаха пичетлесе кăларнă брошюра та çавăн чухлĕ тиражпа саланнă.

И. В. Сталин сочиненийĕсене çĕнĕрен хушса вырăсла кăларма йышăннă, ăна та пĕр-икĕ кун хушшинче çырăнса илсе пĕтернĕ.

Сталинла аслă стройкăсем—пĕтĕм халăх ĕçĕ

АТĂЛ-АХТУБА АЙЛĂМĔНЧЕ

ВОЛЖСКИЙ ПОСЕЛОК (Сталинград облаçĕ), мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Сталинградгидрострой» управленийĕ Атăлăн сулахай çыранĕнчи айлăмне çурхи шывран хӳтĕлемелли ĕççен планне çирĕплетнĕ. Çак ĕççене пурнăçласси вăйлансах пырать. Тури перемычка тĕлĕнче — сулахайри çырантан пуçласа Песчанăй утрав таран — çурхи шывран сыхланмалли ĕççене туса пĕтернĕпе пĕрех. Атăлпа Дон хушшинчи канала тунă çĕрте ĕçленĕ Геннадий Бовш ертсе пыракан экипажăн питĕ хăватлă, 1005 номерлĕ çĕр чавакан снарячĕпе Федор Ситников ертсе пыракан 510 номерлĕ çĕр чавакан снаряд тури перемычка патĕнче ĕçлеççĕ, вĕсем перемычка туса çитерме тăпра купалаççĕ. Çав вăхăтрах строительсем перемычка тăрăх Песчанăй утрав патне кайма чугун çул тăваççĕ, çав утрав çинче гидроэлектростанци çуртне лартма котлован чаваççĕ.

Анатри перемычкăна — Ахтуба шывĕпе Зеленăй утрав хушшинчи пĕвене тума та çын нумай пухнă. 504 номерлĕ земснаряд чавса кăларнă тăпрапа хăйăр шĕвекĕ пысăк пульповодсем тăрăх перемычка патне кунĕн-çĕрĕн юхса тăрать. Кунта пульповодсемпе усă курса малтанхи эстакадăна тума нумай пулмасть тытăннă. Çапах та халĕ Ахтуба шывĕ юхакан вырăнта урлă каçах çĕр купаласа тухнă. Çав вăхăтрах скреперсем, бульдозерсем, экскаваторсем анатри перемычкăна Зеленăй утрав патне туса çитерес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Строительство ĕçĕсене механизацилес енĕпе ĕçлекен управленин главнăй инженерĕ, Сталинла премин лауреачĕ Н. П. Коновалов ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне çапла каланă:

— Çакăн пек пысăк строительство пыракан вырăна çурхи шывран хӳтĕлес тĕлĕшпе нумай ĕçлеме тивет, çав ĕççене кĕске срокра туса пĕтермелле. Пирĕн хăватлă техника пур. Çав техникăна опытлă механизаторсем ĕçлеççĕ. Вĕсене кĕске срокра миллион çурă кубометр çĕр чавса купалама задани панă. Вĕсем çав задание ăнăçлă пурнăçласа пыраççĕ. Перемычкăсем тума асăннă хисепĕн çурри чухлĕ ытла çĕр купаланă та ĕнтĕ.

Çурхи шывран хӳтĕлемелли ĕççене тума инженери искусствине лайăх пĕлес пулать. Сăмахран, çак тĕслĕхе илер. Кăçалхи çуркунне строительство районĕнче Атăлăн çурхи шывĕн анлăшне, иртнĕ çуркуннесенче пулнипе танлаштарсан, çичĕ хут пĕчĕклетмелле. Çурхи шыв юхмалли вырăн сахаллансан юлать. Çавăн пирки ку вырăнта шыв юхăмĕ вăйлă пулма пултарать. Песчанăй утрав Атăл варринелле тăсăлнă пирки, çурхи шыв юхăмĕ çав утрав çине пырса çапăнать. Утрав тавра çаврăнса каякан шыв перемычка тума купаланă çĕре çисе кайма пултарать. Гидроэлектростанци çурчĕн котлованĕ пулмалли Песчанăй утрава хӳтĕлеме эпир металран икĕ хăватлă хӳме: шыв юхăмĕ тăрăх хурçă шпунтсем çапса километр çурă тăршшĕ перемычка, çав перемычкăн тури вĕçĕнче шыв юхăмне сирсе яма металран тепĕр стена турăмăр. Çав стена шыв пырса çапнине сирсе ямалла; металран тунă перемычка купаланă тăпрана шыв илсе каясран хӳтĕлемелле.

Сталинградри гидроэлектростанци строителĕсем Атăл çинчи строительство районне çурхи шывран хӳтĕлеме пур енчен те хатĕрленсе çитĕç.

СТРОИТЕЛЬСТВО ПУÇЛАННĂРАНПА ВИÇÇĔМĔШ ÇУРКУННЕ ÇИТЕТ

ÇĔНĔ КАХОВКА, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Днепр çинчи сталинла стройкăн коллективĕ строительство пуçланнăранпа виççĕмĕш çуркуннене кĕтсе илет. Çурхи шыва кĕтсе илме мĕнле хатĕрленнĕ, ĕçри малашлăхсем мĕнле?

Каховкăри ГЭС строительствин начальникĕ Андрианов юлташ ТАСС корреспонденчĕпе калаçнă чухне çапла пĕлтернĕ:

— Гидроэлектростанци котлованне айлăм енчен хӳтĕлекен тури тата анатри перемычкăсене, тĕпрен илсен, туса пĕтернĕ. Март уйăхĕнче строительсем çав вырăн патĕнче шпунтсем çапса, шыв юхăмне тăрăх пыракан перемычкăна туса пĕтермелле. Унта юлашки шпунтсене мартăн 15-мĕшĕ тĕлне çапса лартаççĕ. Гидротехника сооруженийĕсен управленин иккĕмĕш участокĕнче ĕçлекенсем февраль уйăхĕнче, январьтипе танлаштарсан, шпунтсем икĕ хут нумайрах çапса лартрĕç. Март уйăхĕнче нумай бригадăсем смена хушшинче 38 тонна таран шпунтсем çапса лартаççĕ, нормăна 300—400 процент тултараççĕ.

Гидростроительсем умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ: вĕсен пĕр уйăх хушшинче ултă пин кубометр ытла бетон хывмалла.

Çуркунне пирĕн коллективăн пур сооруженисене тунă çĕрте те бетон хывас ĕçе вăйлатмалла. Çав шутпа гидростанципе пĕве тумалли котлованĕсенчен шыва уçласа кăларас ĕçе хăвăртлатнă, шлюз котлованĕ таврашĕнчи çĕр айĕнчи шывăн шайĕ чакса пырать.

Днепростройра ĕçлекен строительсем кăçал тĕп сооруженисене тума 410 пин кубометр тимĕр-бетон хывма сăмах пачĕç.

ИРТЫШ ÇИНЧЕ

УСТЬ-КАМЕНОГОРСК, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Тури Иртыш çинче çуркунне ир пуçланнă. Тусем çинчен шывсем юхаççĕ. Уйсемпе çарансем хуралнă. Усть-Каменогорск гидроэлектростанцин строительство площадкинче юр пĕтĕмпе тенĕ пекех кайса пĕтнĕ. Пĕверен пĕр километр анатарахра шыв пăртан тасалнă. Стройкăра Иртыш çинчи навигацие хатĕрленеççĕ.

Суднăсем ӳремелли шлюзăн камерин чăнкă стенисем çинче Иван Лоскутов бригадинчи платниксем ĕçлеççĕ. Вĕсем шлюз хапхин пайĕсем валли бетон хывма вырăн хатĕрлеççĕ. Бригада апрель уйăхĕн шучĕпе ĕçлет. Мартăн пĕрремĕш вунăкунлăхĕнче вăл çур уйăхри задание пурнăçланă. Фома Катунин, Иван Раломов тата Виктор Зеленский платниксем кашни икĕ çыншăн ĕçлеççĕ.

Бетонщиксем питех те йывăр условисенче ĕçлеççĕ. Блоксен форми питĕ кăткăс пулнă май, бетон илсе пынă чухне виçĕ хутчен тиесе пушатма тивет. Сталинла стройкăна хăвăртрах туса пĕтерессишĕн ăмăртса, строительсем йывăрлăхсене ăнăçлăн çĕнтерсе пыраççĕ.

Чикваидзе инженер ертсе пыракан участокри монтажниксен хĕрӳ ĕç пуçланнă. Паян вĕсем тури шлюз хапхисене пухма тытăннă. Конструкцисен пĕрремĕш секцийĕсене унта илсе пынă. Иван Терещенко тата Сергаза Адрышев ертсе пыракан бригадăсем шлюз витĕр тухса кайнă чухне суднăсене чарăнса тămалли хатĕрсене вырнаçтараççĕ. Монтажниксем графика ирттерсе пурнăçлаççĕ.

★

Карл Маркс вилнĕренпе 70 çул тултарнă май

Мартăн 14-мĕшĕнче наукăллă социализмăн никĕсне хывнă, тĕнчери пролетариатăн генилле çулпуçĕпе учителĕ Карл Маркс вилнĕренпе 70 çул тултарчĕ.

Столицăри ĕççыннисем çак куна анлă палăртаççĕ. Пĕтĕм Союзри политикăллă тата наукăллă пĕлӳсем саракан обществăн Мускав хула уйрăмĕн лекторĕсем: «Коммунистсен партийĕн манифесчĕ», «Карл Маркспа Фридрих Энгельс—наукăллă социализмăн никĕсне хыванĕсем», «Карл Маркспа Фридрих Энгельс пĕр-пĕринпе туслă ĕçлени» темăсем тăрăх лекцисем вулаççĕ.

Государствăн истори библиотекинче выставка уçнă. Выставкăра Карл Марксăн тĕрлĕ ĕçĕсене, унăн пурнăçĕпе ĕçне кăтартакан материалсене тăратнă. Кунта сайра хутра тĕл пулакан кĕнекесем те пур. Вĕсем хушшинче—вырăсла малтанхи хут кăларнă «Капитал» ятлă кĕнеке, çавăн пекех тата «Коммунистсен партийĕн манифесчĕ» Вĕсене «Освобождение труда» ятлă ушкăн кăларнă. Марксизм Российăра сарални çинчен калакан материалсем питĕ интереслă. Выставкăра çавăн пекех тата «В. И. Ленинпа И. В. Сталин марксизма малалла творчествăллă аталантарни» тема тăрăх уйрăм организациленĕ.

• • •

Наукăллă коммунизм никĕсне хываканĕсен ĕçĕсене пирĕн çĕршывра ĕççыннисен анлă массисем вĕренеççĕ. Наукăн аслă корифейĕсем В. И. Ленинпа И. В. Сталин хăйсен генилле ĕçĕсенче марксизма малалла аталантарнă.

Совет влаçĕ çулĕсенче Совет Союзĕнче Карл Маркспа Ф. Энгельс кĕнекисене пурĕ 1.642 хутчен 64 халăх чĕлхипе 60.712 пин экземпляр пичетлесе кăларнă. «Коммунистсен партийĕн манифестне» 300 хут ытла кăларнă. Марксизмăн çак программăллă документне 58 халăх чĕлхипе кăларнă. Вăл пĕтĕмпе 11.500 пин экземпляр тухнă. Нумай халăхсен чĕлхипе К. Марксăн «Капитал» ятлă кĕнекине, «Францири класс кĕрешĕвĕ 1848 çултан пуçласа 1850 çула çитичченхи вăхăтра», «Ĕç укçи, хак тата услам», «Францири граждан вăрçи» тата ытти кĕнекесене пысăк тиражпа кăларнă.

(ТАСС).

Çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн

ДЗАУДЖИКАУ, мартăн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Иосиф Виссарионович Сталина пытарнă кун Дзауджикау хулинче иртен пуçласа каçченех вĕçĕ-хĕррисĕр халăх утнă. Паркра ватă йывăççем хушшинче И. В. Сталин монуменчĕ ларать. Монумент умне чечек кăшăлĕсем нумай хунă. Вĕсене унта металлургсем, çĕвĕçĕсем, атă-пушмак тăвакансем, студентсем, шкул ачисем илсе пынă.

Хулари пиншер ĕççыннисем репродукторсем патĕнче пухăнса Мускавран паракан передачăна итленĕ. Вĕсем Мускаври çынсемпе пĕрле Иосиф Виссарионович Сталинпа сывпуллашнă. Мускавра Хĕрлĕ площадьре хурлăхлă митинг пуçлансан, пурте Г. М. Маленков, Л. П. Берия тата В. М. Молотов сăмахĕсене тимлĕн итленĕ.

Республикăри фабрикăсемпе заводсенче, колхозсемпе совхозсенче Çурçĕр-Осетири ĕççыннисем Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Совет правительствине çапла шантарса каланă: Иосиф Виссарионович Сталин хăйĕн пурнăçне панă ĕçе малалла туса пыма ĕççыннисем хăйсен мĕнпур вăйне хураççĕ.

Кировски районĕнчи Змейски станицинчи площаде виçĕ колхоз членĕсем хурлăхлă митинга пухăннă.

Ленин ячĕпе тăракан колхозри уй-хир бригадин бригадирĕ Синявский юлташ çапла каланă:

— Сталин юлташ пире телей çулне—колхоз çулне кăтартса пачĕ. Эпир Коммунистсен партине, Совет правительствине социализмла ялхуçалăхне малашне те вăйлатса чечеклентерсе пыма, артель пуянлăхне ӳстерме тупа тăватпăр. Пирĕн колхоз çуракине тухрĕ. Эпир кăçал мĕнпур лаптăк çинче кашни гектартан 30 центнер тĕштырă тата 200 центнер пахча çимĕç туса илме çирĕп сăмах паратпăр.

— Юратнă çулпуç тата учитель, колхоз хресченĕсен чи лайăх тусĕ, Иосиф Виссарионович Сталин вилчĕ, — тенĕ Курпски районĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи колхозница Инаева юлташ.—Çухату питĕ пысăк, эпир хытă хурланатпăр. Анчах та эпир алла усмастпăр. Сталин ятне чĕрере тытса, эпир хамăрăн Тăван çĕршывăн ырлăхĕшĕн ĕçлĕпĕр.

Коммунизм тумалли сталинла программа

Ленинпа Сталин Совет Союзӗнчи Коммунистсен аслӑ партине туса ҫирӗплетрӗҫ; парти рабочи класпа хресченсене марксизм-ленинизм идейисем тӑрӑх воспитани парас ӗҫе питӗ анлӑн сарса ячӗ, халӑх массисене обществӑна революциллӗ майпа ҫӗнетсе улӑштарассишӗн кӗрешме ҫӗклерӗ. Ҫапла Ленинпа Сталин историллӗ пысӑк ӗҫ турӗҫ.

Пирӗн парти пек политикӑллӑ парти, халӑхӑн йышлӑ массисене хӑйӗн влиянине илнӗ, вӗсенчен политика енӗпе ҫутта тухнӑ, кӗрешӳ тӗллевне ӑнланакан тата ҫав тӗллеве пурнӑҫлассишӗн активлӑ кӗрешекен ҫӑр туса хума пултарнӑ партии историре урӑх пулман.

Ленинпа Сталин туса ҫирӗплетнӗ пирӗн Коммунистсен партийӗ пек идея енӗпе вӑйлӑ хӗҫпӑшалланнӑ тата организаци енӗпе ҫирӗп пӗтӗҫнӗ парти историре урӑх пулман.

Сталин юлташ, марксизм-ленинизм теорине аталантарса, историре ҫӗнӗ ҫул хывса пыракан партие идея енӗпе хӗҫпӑшаллантарассине питӗ ҫӳлӗ пусӑма ҫӗклерӗ.

И. В. Сталин, ССР Союзӗнчи социализм строительствин аслӑ опытне пӗтӗҫтерсе, социализм строительстви ҫинчен тӗплӗ вӗрентӳ туса пачӗ. Вӑл пролетариат диктатурин марксистла-ленинла теорине пуянлатрӗ, Ленин идейисене — социализмшӑн кӗрешес ӗҫре рабочи класпа хресченсен союзӗ, ҫак союза пролетариат партийӗ ертсе пыни тата кӑлӑ вырӑн йышӑнни ҫинчен калакан идейӑсене — аталантарчӗ.

Сталин юлташ пролетариат диктатурин экономикӑллӑ политики ҫинчен Ленин панӑ идейӑсене аталантарчӗ, ҫӗршыва индустриализацилемелли майсене палӑртрӗ тата ялхуҫалӑхне коллективизацилессин теорине турӗ. Сталин юлташ эксплуататорла классене пӗтермелли ҫулсене кӑтартса пачӗ. Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе совет халӑхӗ хулара та, ялта та капитализмла элементсене тӗпӗтымарӗпех кӑкласа тӑкрӗ, ҫынна ҫын эксплуатациленине пӗтерчӗ, историре малтанхи хут социализмла общество турӗ. Малта пыракан ӑслӑ ҫынсен ӗмӗрхи ӗмӗчӗ пулнӑ социализм совет халӑхӗн паттӑрлӑхне пула 200 миллион ҫын пурӑнакан ҫӗршывра пурнӑҫа кӗчӗ. ССР Союзӗнче социализм ҫӗнтерни Ленинпа Сталин социализм ҫинчен вӗрентни, сталинла руководство чаплӑ ҫӗнтерӳ туни пулчӗ.

Марксизм-ленинизм ҫапла вӗрентет: коммунизм аталанӑвӗнче икӗ сыпӑк пулать, пӗррӗмӗш сыпӑк — социализм, иккӗмӗш, чи ҫӳлти сыпӑк — коммунизм, социализм майӗпен коммунизма ӳссе куҫать.

Сталин юлташ социализмран коммунизма куҫмалли ҫулсене гениллӗ кӑтартса пачӗ, коммунизмлӑ обществӑн тӗп паллисене палӑртрӗ. Сталин юлташ социализмран майӗпен коммунизма куҫасси ҫинчен вӗрентни — марксизм-ленинизм наукинчи ҫӗнӗ сыпӑк.

И. В. Сталин ҫакна кӑтартса пачӗ: социализмран коммунизма куҫасси — историри объективлӑ процесс. Хӑй ҫырнӑ «ССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑлла проблемисем» ятлӑ чаплӑ произведенире Сталин юлташ социализмӑн историллӗ аталанӑвӗ кӑларса тӑратнӑ ыйтусем ҫине ответ пачӗ. Социализмӑн экономикӑлла ыйтӑвӗсене тӗплӗн тишкерсе тухса, Сталин юлташ социализмран коммунизма куҫассин объективлӑ экономикӑлла законӗсене уҫса палӑртрӗ.

Социализмӑн экономикӑлла тӗп законне уҫса палӑртса тата ун ҫинчен тӗплӗ ҫырса, И. В. Сталин ҫак закон социализмлӑ общество аталанӑвӗн мӗнпур тӗп енӗсемпе тӗп процесӗсене палӑртса тӑнине, коммунизм ҫӗнтересси историре пурпӗрех пулмаллине кӑтартса пачӗ.

Социализм майӗпен коммунизма ӳссе куҫать. Социализмӑн экономикӑлла законӗсем ҫав вӑхӑтрах коммунизм строительствин экономикӑлла законӗсем пулса тӑраҫҫӗ.

И. В. Сталин социализмӑн экономикӑлла аталанӑвӗн диалектикӑллӑ законӗсене гениллӗ уҫса палӑртрӗ, социализмӑн экономикӑлла тӗп законне ытти экономикӑлла законсем, вӑл шутра халӑх хуҫалӑхне план йӗркипе аталантарса пымалли закон та, пӑхӑнса тӑнине кӑтартрӗ. И. В. Сталин ҫапла кӑтартса пачӗ: «Халӑх хуҫалӑхне план йӗркипе аталантармалли закон умра задача пур пулсан ҫеҫ, ҫав задачӑна пурнӑҫа кӗртессишӗн халӑх хуҫалӑхне план йӗркипе аталантараҫҫӗ пулсан ҫеҫ тивӗҫлӗ усӑ пама пултарать. Ҫак задачӑна халӑх хуҫалӑхне план тӑрӑх аталантармалли закон хӑй пама пултараймасть. Халӑх хуҫалӑхне планлани пушшех те ҫав задачӑна пама пултараймасть. Ҫак задача социализмӑн экономикӑлла тӗп законӗнче, унӑн... ыйтӑвӗсенче палӑрса тӑрать».

Социализмран коммунизма куҫнӑ вӑхӑтра Коммунистсен партийӗн политики мӗнле пулмаллине Сталин юлташ наука хӑвачӗпе никӗслерӗ, ҫав политика социализмӑн тӗпчесе пӗлнӗ законӗсем ҫинче, объективлӑ, ҫынсен ирӗкӗнчен килмесӗр ӗҫлекен законсем ҫинче, никӗсленсе тӑнине кӑтартса пачӗ.

Ыйтусене тӗрӗс мар, субъективистла ӑнланакансем; ҫынсем хӑйсен ирӗкӗпе экономикӑлла ҫӗнӗ законсем туса хатӗрлеме, экономикӑлла законсене улӑштарма, ҫӗнетсе йӗркелеме пултараҫҫӗ, тесе шутланӑ. Ҫавӑн пек йӑнӑш шухӑшсене И. В. Сталин ҫӗмӗрсе тӑкрӗ. Вӑл ҫавӑн пекех тата ытти йӑнӑш шухӑшсене те — обществӑн объективлӑ законӗсем умӗнче ҫынсем вӑйсӑр, тесе каланине ҫӗмӗрсе тӑкрӗ. Субъективистла шухӑшсем хуҫалӑх ӗҫӗнче авантюрӑсем тӑвасси патне илсе пыраҫҫӗ пулсан, объективлӑ законсенчен фетиш туса хуни алӑсене усса нимӗн тумасӑр ларасси патне илсе пырать.

Сталин юлташ ҫапла вӗрентет: ҫынсем общество законӗсем умӗнче вӑйсӑр мар. Ҫынсем ҫав законсене тӗпчесе пӗлме, вӗсем ҫине таянма, ҫав законсене пӗлсе ӗҫлесе пыма, ҫапла вара халӑх хуҫалӑхне пур енӗпе те аталантарса пыма пултараҫҫӗ. Ҫапла ӗнтӗ, ҫынсем объективлӑ законсене пӗлсе ӗҫлесе пырсан вӑйлӑ пулаҫҫӗ, обществӑн экономикӑлла аталанӑвне йӗркелесе пыма пултараҫҫӗ.

Обществӑн экономикӑлла аталанӑвне пӗлсе ертсе пыма пултарнине пирӗн Коммунистсен партийӗ чаплӑн кӑтартса пачӗ. Вӑл, Сталин юлташ ертсе пынипе, экономикӑна пысӑккӑн ҫӗнетсе улӑштарчӗ, ҫавна май пирӗн ҫӗршыв, ӗлӗк экономика енӗпе кая юлнӑ ҫӗртен, социализмлӑ хӑватлӑ держава, коммунизм ӑнӑҫлӑ туса пыракан ҫӗршыв пулса тӑчӗ.

Социализмӑн экономикӑлла законӗсем механически мар, стихийӑллӑ йӗркепе мар, коммунизм строителӗсем ҫав законсене пӗлсе, вӗсем ҫине таянса ӗҫленипе пурнӑҫланса пыраҫҫӗ. Ҫав законсем объективлӑ законсем пулнине асра тытса, Сталин юлташ коммунизма куҫмалли материально-производствӑллӑ никӗспе культурӑллӑ условисем хатӗрлеме хуҫалӑха мӗнле ертсе пымаллине кӑтартса пачӗ.

Коммунизма куҫма чӑн-чӑнах хатӗрленсе ҫитес тесен, вӗрентет И. В. Сталин юлташ, пӗррӗмӗшӗнчен, пӗтӗм обществӑллӑ производствӑна ӳстерсе пыма, уйрӑмах производство хатӗрӗсем туса кӑларассине ытларах ӳстерсе пыма ҫирӗп никӗс тумалла.

Производство хатӗрӗсем туса кӑларассине ытларах ӳстерни анлӑн пулса пыракан социализмлӑ воспроизводство условийӗ пулать, чи ҫӳлте тӑракан экономика — коммунизм экономики туса пыма май парать. Пӗтӗм обществӑллӑ производствӑна пӗрмаях ӳстерсе пыни пӗтӗм обществӑн ялан ӳссе пыракан материальнӑй тата культурӑллӑ ыйтӑвӗсене тивӗҫтерме кирлӗ.

Коммунизма куҫма малтанлӑха кирлӗ тӗп условисенчен пӗри колхозлӑ харпӑрлӑха пӗтӗм халӑх харпӑрлӑхӗн шайне ҫити ҫӗклесси пулать, — ҫакна колхозсене усӑ кӳрсе, ҫапла вара, пӗтӗм обществӑна усӑ кӳрсе, майӗпен улшӑнусем туса пынипе пурнӑҫламалла, ҫавӑн пекех майӗпен улшӑнусем туса пынипе тавар сутса илни вырӑнне продуктпа продукт улӑштарса илес йӗрке тумалла.

Социализмлӑ харпӑрлӑхӑн икӗ форминчен пӗрлӗхлӗ коммунизмлӑ харпӑрлӑх патне куҫас ыйту — марксизм наукинчи пӗтӗмпех ҫӗнӗ ыйту. И. В. Сталин ҫавӑн пек куҫни мӗнле ҫулпа пулса пымаллине гениллӗ кӑтартса пачӗ.

Вӑл ҫакна палӑртса пачӗ: социализмлӑ харпӑрлӑхӑн икӗ форми пур чухне укҫалла тавар сутса илесси те пулать. Тавар ҫаврӑнӑшӗ пулни коммунизма куҫассипе килӗшсе тӑмасть. Ҫавӑнпа та тавар ҫаврӑнӑшӗ вырӑнне продуктпа продукт улӑштармалла тӑвасси коммунизма куҫмалли тӗп условисенчен пӗри пулать. Сталин юлташ коммунизма куҫма пӗтӗм условисене хатӗрлесе ҫитерме хӑш тӗп сыпӑкран ярса тытмаллине кӑтартса пачӗ. Ҫакӑн пек тӗп сыпӑк хальхи вӑхӑтра промышленноҫпа ялхуҫалӑх продукчӗсем улӑштарни пулать, — ҫак ӗҫӗн пуҫламӑшӗ ялхуҫалӑх продукчӗсем парамасене промышленность продукчӗсем парса тӑни пулать.

Сталин юлташ колхозлӑ харпӑрлӑха пӗтӗм халӑх харпӑрлӑхӗн шайне ҫити ҫӗклентерес ыйтӑва, рабочи класпа хресченсем хушшинчи уйрӑмлӑха пӗтерес, хулапа ял хушшинчи тӗп уйрӑмлӑха пӗтерес, классӑр коммунизмлӑ обществӑна куҫас ыйтусене марксистсен мӗнле татса памаллине кӑтартса пачӗ.

Коммунизма куҫмалли условисем хатӗрлес ыйтӑва пӑхса тухнӑ чухне И. В. Сталин производительнӑй вӑйсемпе производствӑлла хутшӑнусен аталанӑвне кӑна мар, культурӑллӑ условисем хатӗрлессине те асра тытнӑ. Обществӑн культурӑллӑ шайӗ ҫӳлӗрех пулсан, вара ҫынсен ӗҫ тухӑҫлӑхӗ пысӑкрах пулать, производительнӑй вӑйсем ӑнӑҫлӑрах аталанса пыраҫҫӗ. Коммунизм вӑхӑтӗнче ҫынсем пурте культурӑллӑ, нумай пӗлекен пулаҫҫӗ, тесе кӑтартса панӑ Сталин юлташ. Вӑл кӑтартса панӑ тӑрӑх, пӗтӗм обществӑн культурӑллӑ шайӗ ӳсе пыни коммунизма куҫма хатӗрленмелли тӗп условисем пулать. «...Общество культурине, — тесе ҫырнӑ И. В. Сталин юлташ, — чи ҫӳлӗ шая ҫити ӳстермелле, вӑл обществӑн мӗнпур членӗсене вӑй-халпа ӑс-тӑн тӗлӗшӗнчи пултарулӑхӗсене пур енӗпе те аталантарма май патӑр, общество членӗсем общество аталанӑвӗн активлӑ деятелӗсем пулмашкӑн ҫителӗклӗ таран вӗренме пултарччӑр, ҫапла вара вӗсем, ӗҫлев пайланса тӑнине пула, ӗмӗр тӑршшӗпех пӗр-пӗр профессипе ҫыхӑнса тӑмалла ан пултăр».

Ҫак положенисем обществӑна культура енӗпе воспитани памалли программа пулса тӑраҫҫӗ.

Ҫынсене пур енӗпе те вӗренме май туса парас, пӗтӗм обществӑн культурӑллӑ шайне пысӑккӑн ӳстерес тесе, ӗҫлевӗн хальхи йӗркине нумай улӑштармалла пулать. Ҫавна тума чи малтан ӗҫ кунне сахалтан та 6 сехет, унтан вара 5 сехет таран чакармалла. Ҫакна тума, малалла, пурне те обязательнӑй йӗркепе политехникӑлла вӗрентме тытӑнмалла, пурӑнмалли ҫурт-йӗр условийӗсене тӗпрех лайӑхлатмалла тата рабочисемпе служащисен реальнӑй ӗҫ укҫине сахалтан та икӗ хут, ытларах та пулмасан, ӳстермелле.

Ҫаксене пурнӑҫланӑ май ӑс-тӑн ӗҫлевӗпе вӑй-хал ӗҫлевӗ хушшинчи тӗп уйрӑмлӑх пӗтет.

Сталин юлташ обществӑна культура енӗпе воспитани парас задачӑна пысӑккӑн кӑларса тӑратрӗ, — ку задачӑна ҫакӑн пек пысӑк вырӑна хуни марксистла наукӑра халиччен пулман.

И. В. Сталинӑн «ССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑлла проблемисем» ятлӑ произведенийӗ Сталин генийӗн калама ҫук аслӑ произведенийӗ, коммунизмӑн программӑллӑ докуменчӗ пулса тӑрать. Ҫак произведенире ССР Союзӗнче социализм строительствинче тунӑ ҫитӗнӳсене тӗплӗн пӗтӗҫтернӗ, коммунизма куҫмалли ҫулсене кӑтартса панӑ.

Хальхи вӑхӑтра коммунизм миллионшар совет ҫыннисен кулленхи ӗҫӗ пулса тӑчӗ. Куллен-кун ӗҫлесе совет халӑхӗ коммунизмлӑ обществӑн аслӑ та чаплӑ ҫуртне тӑвать.

Сталин юлташӑн «ССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑлла проблемисем» ятлӑ произведенийӗнче Ленинпа Сталинӑн вилӗмсӗр идейисене пурнӑҫа кӗртмелли ҫулсене уҫҫӑн кӑтартса панӑ.

Коммунизмӑн гениллӗ зодчийӗ И. В. Сталин пирӗн халӑх валли коммунизм строительствин наукине туса хӑварчӗ, вӑл воспитани парса ӳстернӗ парти совет халӑхне ертсе пырать. Пирӗн ҫӗршывра партипе государство руководстви аслӑ Сталинӑн соратникӗсен, унпа пӗрле социализм строительствин историллӗ ӗҫне ертсе пынӑ ҫынсен шанчӑклӑ аллинче тӑрать. Ҫавӑнпа совет халӑхӗ, хӑйӗн аслӑ учителӗпе ҫулпуҫне Сталин юлташа юлашки ҫула ӑсатса, малашнехи пурнӑҫ ҫине шанчӑклӑн пӑхать, мӗншӗн тесен Ленин — Сталин ялавне шанчӑклӑ та ҫирӗп ленинецсем-сталинецсем йӑтса пыраҫҫӗ. Партипе правительствӑн Сталин юлташ пӑхса ӳстернӗ руководителӗсем, аслӑ ҫулпуҫӑмӑр хушса хӑварнисене пурнӑҫласа, совет халӑхне тӳрӗ ҫулпа аслӑ тӗллев патне — коммунизм патне илсе пыраҫҫӗ.

П. ЮДИН.

(«ПРАВДА» хаҫатран).

Чӑваш халӑхӗ, пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗрле, Коммунистсен партийӗпе Совет Правительстви тавра тата тачӑрах пӗтӗҫет

* * *

Парти ертсе пынипе

Шупашкарти лента тӗртекен фабрикӑри рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем мартӑн 9-мӗшӗнче И. В. Сталин тупӑкӗ умӗнче СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗ, Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн Секретарӗ Г. М. Маленков юлташ тата Л. П. Берияпа В. М. Молотов юлташсем каланӑ сӑмахсене ырласа йышӑнаҫҫӗ. Фабрикӑри агитаторсем Г. М. Маленков, Л. П. Берия тата В. М. Молотов юлташсен сӑмахӗсем тӑрӑх рабочисем хушшинче калаҫусем ирттереҫҫӗ. Рабочисем Коммунистсен партийӗпе Совет Правительствине вӗҫӗмсӗр юратса шанса тӑнине палӑртаҫҫӗ.

В. Крюков бригадир ҫапла каларӗ:

— Маленков юлташ Хӗрлӗ площадьре каланӑ сӑмах пире шанчӑклӑн ӗҫлесе пурӑнма хӑват парать. Парти пире коммунизм строительствин сталинла программине пурнӑҫлассишӗн пӗтӗм вӑй-хӑватпа ӗҫлесе пыма чӗнет. Ҫак программӑна пурнӑҫлас тесе, эпир ырми-канми ӗҫлӗпӗр, паха продукци туса кӑларӑпӑр, юратнӑ Тӑван ҫӗршыв вӑй-хӑватне тӗреклетме пулӑшӑпӑр.

— Иосиф Виссарионович Сталин вилни калама ҫук пысӑк ҫухату пулса тӑрать, — тет фабрикӑри паллӑ стахановка А. Саботарева юлташ. — Анчах эпир пуҫсене усса лармастпӑр, малалла шанчӑклӑн пӑхатпӑр. Пирӗн партин Центральнӑй Комитечӗ тата Совет Правительстви ҫӗршыва ертсе пырас ӗҫре Ленинпа Сталинӑн аслӑ шкулӗнчен вӗренсе тухрӗҫ. Пирӗн парти, аслӑ Сталин хушса хӑварнисене пурнӑҫласа, хамӑр ҫӗршывра коммунизм тӑвас аслӑ ӗҫшӗн малашне кӗрешмелли ҫула уҫҫӑн кӑтартса парать. Халӑх ырлӑхӗшӗн тӑрӑшасси, халӑх ӗмӗчӗсене пурнӑҫа кӗртесси Коммунистсен партийӗшӗн чи аслӑ закон пулса тӑрать. Эпӗ совет халӑхӗн, Тӑван ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн чунтан тӑрӑшса ӗҫлеме тупа тӑватӑп.

— Ҫулпуҫӑн вилӗмсӗр ӗҫне унӑн шанчӑклӑ соратникӗсем малалла ҫирӗппӗн пурнӑҫласа пырӗҫ. Вӗсем Тӑван ҫӗршыва — мир тӗрекне малалла чечеклентерессишӗн, ҫӗршывӑн вӑй-хӑватне ӳстерессишӗн, аслӑ Сталин пекех, ырми-канми ӗҫлӗҫ, Ленин ялавне ҫӳлте тытса совет халӑхне ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем патне ертсе кайӗҫ, ҫутӑ малашлӑх — коммунизм патне илсе ҫитерӗҫ. Пирӗн халӑхӑн ҫулне марксизм-ленинизмӑн пурне те ҫӗнтерекен вӗрентӗвӗ ҫутатса тӑрать, — тет Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ инваличӗ Н. Сильянов юлташ.

Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсем И. В. Сталина пытарнӑ кун каланӑ сӑмахсенче ССР Союзӗн тулашри мирлӗ политикине питех те уҫҫӑн кӑтартса панӑ. Пирӗн ҫӗршыв тулашри политикӑна — мире сыхласа хӑвармалли тата тӗреклетмелли сталинла политикӑна — пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑҫа кӗртсе пырать. Фабрика коллективӗ ҫакна питӗ лайӑх ӑнланать.

— Совет Союзӗ мир ӗҫне вӗҫне ҫитиех парӑнса тӑрать, миллионшар ҫынсен юнне тӑкмалла мар тӑвас тесе, телейлӗ пурнӑҫа мирлӗн туса пымалла пултӑр тесе, вӑл мӗн кирлине пурне те тӑвать. Стахановла ӗҫлесе паха продукци туса кӑларасси, Тӑван ҫӗршывӑн вӑй-хӑватне ӳстерсе пырасси пирӗн чи таса тивӗҫ пулса тӑрать, — теҫҫӗ фабрикӑри рабочисем.

Аслӑ Сталин ятне асра тытса

МУРКАШ. Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн, совет халӑхӗн тата пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен аслӑ ҫулпуҫне Иосиф Виссарионович Сталина асӑнса, мартӑн 12-мӗшӗнче Сталин ячӗпе тӑракан ялхуҫалӑх артелӗнче колхозниксен нумай ҫынлӑ пухӑвӗ пулса иртрӗ.

Пухӑва 300 ҫын ытла пынӑ. Пухӑва председатель пулса ертсе пыракан, 70 ҫулхи колхозник, активлӑ производственник П. А. Смирнов колхоз правлени председательне Е. А. Андреев юлташа сӑмах парать.

Андреев юлташ Мускавра, аслӑ ҫулпуҫа пытарнӑ ҫӗрте пулнӑ. Пухӑва пынисем хӑйсен председателӗ каласа панине тимлӗн итлеҫҫӗ.

— Мартӑн 8-мӗшӗнчи кӑнтӑрла тӗлне эпир Мускава ҫитрӗмӗр, — тет Андреев юлташ. — Кӑнтӑрла иртсен 14 сехет те 50 минутра пирӗн делегаци Союзсен ҫуртӗн Колоннӑллӑ залне пычӗ. Унта, траурлӑ ялавсем айӗнче, ҫӳлӗ постамент ҫинче пирӗн партипе пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен аслӑ ҫулпуҫӗн, колхозлӑ хресченсен чи ҫывӑх тусӗн, тӑван аттемӗр Иосиф Виссарионович Сталинӑн ӳтне хунӑ тупӑка вырнаҫтарса лартнӑ. Пирӗн республикӑри мӗнпур ӗҫҫыннисен ячӗпе эпир тупӑк умне чечек кӑшӑлӗ хутӑмӑр. Чечек кӑшӑлӗ ҫинчи хӗрлӗ лента ҫине: «Аслӑ ҫулпуҫа, тӑван аттене Иосиф Виссарионович Сталина — Чӑваш АССРӗнчи ӗҫҫыннисенчен» тесе ҫырнӑ.

Ун хыҫҫӑн пирӗн делегаци Иосиф Виссарионович Сталин тупӑкӗ умӗнче хисеплӗ хурала тӑчӗ. Пирӗнтен кашниех, ҫулпуҫӑн тупӑкӗ умӗнче тӑнӑ чухне, Сталин юлташӑн ҫутӑ сӑнарне ӗмӗрлӗхех хӑйӗн чӗринче тытса юлчӗ. Ҫакӑ хурлӑхлӑ кунсенче Мускавра пулнӑ ҫынсем мӗн тери хурланнине эпӗ нимӗнле сӑмахсемпе те каласа пама пултараймастӑп. Халӑхӑн хурлӑхне нимӗнле сӑмахсемпе те ҫырса кӑтартма май ҫук. Пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен представителӗсем хӑйсен пуҫӗсене пирӗн аслӑ ҫулпуҫӑн тупӑкӗ умӗнче тайса тӑчӗҫ, вӑл хушса хӑварнисене чыслӑн пурнӑҫласа пыма тупа турӗҫ.

Иккӗмӗш кунхине эпир Хӗрлӗ площадьре пултӑмӑр. СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗ тата Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн Секретарӗ Г. М. Маленков юлташ, СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗн пӗррӗмӗш заместителӗсем Л. П. Берия тата В. М. Молотов юлташсем каланӑ сӑмахсене итлерӗмӗр. Вӗсен сӑмахӗсем — пирӗн халӑх Ленинпа Сталинӑн аслӑ ӗҫне чӗререн парӑнса тӑма тупа туни, пирӗн ретсене партипе Совет Правительстви тавра пӗтӗҫтерме, пӗрлӗхлӗ тата пӗтӗҫӳллӗ, сыхӑлӑхлӑ пулма, Тӑван ҫӗршыва парӑнса тӑма, коммунизм патне утма чӗнни пулчӗ.

Малалла Андреев юлташ Сталин юлташа пытарни ҫинчен, пирӗн партипе совет халӑхӗ тата пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисем умне тухса тӑнӑ пысӑк хурлӑх ҫинчен, Мускав, пӗтӗм Тӑван ҫӗршыв мӗн тери хурланни ҫинчен тӗплӗн каласа пачӗ.

Сталин вилчӗ, анчах унӑн ӗҫӗ пурӑнать. Никам ҫӗнтерейми аслӑ парти, Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн ленинла-сталинла Центральнӑй Комитечӗ пурӑнать. Пирӗн ҫӗршыва Сталин юлташӑн шанчӑклӑ вӗренекенӗсемпе соратникӗсем ертсе пыраҫҫӗ. Вӗсем пирӗн ҫӗршыва Сталин юлташ кӑтартса панӑ ҫулпа, коммунизм ҫулӗпе ертсе пырӗҫ.

Пирӗн руководительсем Сталин тупӑкӗ умӗнче тухса каланӑ сӑмахсем ҫине ответлесе, пирӗн тата лайӑхрах ӗҫлемелле, хамӑрӑн вӑйсене коммунизм строительствин аслӑ задачисене пурнӑҫлас ӗҫе мобилизацилемелле.

Колхозниксем Андреев юлташа нумай ыйтусем пачӗҫ. Пухура уй-хир бригадин бригадирӗ Павлинов тата фермӑра ӗҫлекен Патрикеева юлташсем тухса каларӗҫ.

Колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗ резолюци йышӑнчӗ. Резолюцире СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗ тата КПСС Центральнӑй Комитечӗн Секретарӗ, пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен аслӑ ҫулпуҫӗпе ӑслӑ учителӗ Иосиф Виссарионович Сталин вилнӗ пирки колхозниксем чунчӗререн хурланнине палӑртнӑ.

Сталин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем кӑҫалхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑ вӗҫлеме, колхоза организаципе хуҫалӑх тӗлӗшӗнчен малашне те тӗреклетсе пыма, обществӑллӑ хуҫалӑха пур енӗпе те аталантарма обязательствӑсем илчӗҫ.

Колхозниксем кӑҫал кашни гектартан вӑтам шутпа 16 центнертан кая мар тӗштырӑ тата ытти культурӑсем пухса кӗртме, кашни гектартан 5-шер центнер кантӑр сӳсӗ туса илме, кашни ӗнерен вӑтам шутпа 1.600 литртан кая мар сӗт суса илме, кашни сысна ами пуҫне вунсакӑр ҫураран кая мар пӑхса ӳстерме, кашни ҫӗр ӗне пуҫне 100 пӑруран кая мар, кашни 100 сурӑх пуҫне 110 путекрен кая мар пӑхса ӳстерме, октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне государствӑна тырӑ памалли плана, ноябрӗн 1-мӗшӗнчен кая юлмасӑр мӗнпур ялхуҫалӑх продукчӗсене памалли плана тултарма сӑмах пачӗҫ. Вӗсем тепӗр куннех хӑйсен обязательствисене пурнӑҫлама тытӑнчӗҫ.

Пирӗн аслӑ ҫулпуҫӑмӑрпа учителӗмӗрӗн Иосиф Виссарионович Сталинӑн вилӗмсӗр ӗҫне малалла туса пырас тесе, Сталин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем иртен пуҫласа ҫӗм ҫӗрлеччен чунтан тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

Нихҫан та манас ҫук

Ленин соратникӗн тата Ленинӑн ӗҫне гениллӗ малалла туса пыраканӗн, Коммунистсен партийӗпе совет халӑхӗн аслӑран та аслӑ ҫулпуҫӗн, учителӗн — Иосиф Виссарионович Сталинӑн чӗри тапма чарӑнни совет ҫамрӑкӗсемпе шкулта вӗренекен ачасемшӗн питех те йывӑр хурлӑх пулса тӑрать.

Анчах та пирӗн алӑсене усса лармалла мар. Пире Ленинпа Сталин ҫитӗнтернӗ, ӗҫпе кӗрешӳре пиҫӗхнӗ Коммунистсен аслӑ партийӗ ертсе пырать. Вӑл ертсе пынипе эпир Сталин юлташ кӑтартса панӑ ҫулпа малалла, коммунизм ҫӗнтерӗвӗ патне пыратпӑр. Эпир, шкулта вӗренекен ачасем, Сталин аттемӗр тупӑкӗ умӗнче тӑрӑшса вӗренме, малта пыракан совет наукине алла илсе коммунизмӑн активлӑ строителӗсем пулма тупа тӑватпӑр.

Сталин юлташ вилчӗ пулсан та унӑн ячӗ яланах пирӗн чӗрере пулӗ. Эпир хаклӑран та хаклӑ тӑван аттене, юратнӑ Иосиф Виссарионович Сталина нихҫан та манас ҫук.

Ю. ПЕТРОВ,

Красноармейски вӑтам шкулӗнчи 9-мӗш класра вӗренекен.

Чӑваш халӑхӗ ячӗпе тупа турӑмӑр

Мартӑн 9-мӗшӗнче совет халӑхӗ, тӗнчери прогрессивлӑ мӗнпур этемлӗх аслӑ Ленин ӗҫне малалла туса пынӑ халӑхсен чи аслӑ та юратнӑ ҫулпуҫне Иосиф Виссарионович Сталина ӗмӗрлӗхе юлашки ҫула ӑсатрӗҫ.

Ҫӗршывӑн ҫак хурлӑхлӑ кунсенче эпӗ чӑваш халӑхӗн делегацийӗпе пӗрле Мускавра, хаклӑ учителӗмӗре, чӑваш халӑхӗн чи юратнӑ тусне И. В. Сталина пытарнӑ ҫӗрте пултӑм. Ҫак хурлӑхлӑ кунсем манӑн чӗререн нихҫан та тухас ҫук, эпӗ вӗсене виличченех асра тытӑп.

Аслӑ Сталина пытарма Мускава Совет Союзӗнчи пур тӗрлӗ халӑхсем тата урӑх ҫӗршывсен представителӗсем питӗ нумай пухӑннӑ. Пурте вӗсем хӑйсен халӑхӗсем И. В. Сталин юлташа чунтан юратни, вӑл пирӗнтен ӗмӗрлӗхе уйрӑлса кайнишӗн чӗререн хурланни ҫинчен каласа параҫҫӗ. Тӗрлӗ халӑхсен представителӗсен калаҫӑвӗнче, вӗсен сӑн-пуҫӗнче пӗтӗм ҫӗршыв, пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисем чӗререн хурланнине туйтӑн.

Мартӑн 8-мӗшӗнче виҫӗ сехетре эпир Иосиф Виссарионович Сталин тупӑкӗ умӗнчен иртрӗмӗр. Эпӗ халиччен Сталина курман, ӑна малтанхи хут куртӑм. Ӑна сывӑ чухне курма телей пулмарӗ. Акӑ халӗ эпӗ унӑн таса та ҫутӑ сӑнӗ ҫине тинкерсе пӑхатӑп. Юратнӑ атте, учитель И. В. Сталин ӗмӗрлӗхех куҫӗсене хупнӑ.

Пирӗн республика делегацийӗ И. В. Сталин тупӑкӗ патӗнче хисеплӗ хурала тӑнӑ чухне эпӗ унӑн ҫине куҫ илмесӗр пӑхса тӑтӑм. Манӑн аслӑ ҫулпуҫӑн сӑнне ӗмӗрлӗхе чӗрене вырнаҫтарас килчӗ. Ҫулпуҫӑн сӑнӗ халӗ те манӑн куҫ умӗнче. Эпӗ ӑна килте те, ӗҫре те — пур ҫӗрте те куратӑп, туйтӑп. Ҫам ӑна пӗрре курнӑ, ҫавӑ нихҫан та унӑн сӑнарне манма пултараймасть. Ҫакӑ ҫынна ӗҫре те, кӗрешӳре те ҫӗнӗ вӑй хушать.

Сталин тупӑкӗ умӗнче хисеплӗ хурала тӑнӑ чухне пирӗн халӑх хӑйӗн ҫулпуҫне тата учительне чӗререн тата вӗҫӗ-хӗррисӗр юратнине тата уҫҫӑн куратӑн. Чылайӑшӗсем чӑтаймаҫҫӗ — йӗреҫҫӗ, тупӑк патӗнчен пуҫӗсене усса, ҫав тери хурланса иртеҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах вӗсем Ленин — Сталин ӗҫӗсене вӗҫне ҫитиех туса ҫитерме, Ленин — Сталин ялавне ҫӳлте тытма пулса тупа тӑваҫҫӗ. Залра темӗн чухлӗ чечек кӑшӑлӗсем. Траурлӑ хӑюсем ҫине тӗрлӗ халӑхсен чӗлхипе аслӑ ҫулпуҫа чӗререн тав туса ҫырнӑ чи ӑшӑ та хаклӑ сӑмахсем. Ҫав чечек кӑшӑлӗсем хушшинче чӑваш халӑхӗ хунӑ кӑшӑл та пур. Пирӗн халӑх пӗтӗм ҫӗршывпа пӗрле хурланать. Ҫулпуҫ туса пынӑ ӗҫе малалла пурнӑҫласа пыма тупа тӑвать.

Мартӑн 9-мӗшӗнче, И. В. Сталина пытарнӑ кун, эпир мавзолей патӗнчи трибуна ҫинче пултӑмӑр. Хӗрлӗ площадь, ун ҫывӑхӗнчи урамсем халӑхпа тулнӑ. Сталин юлташ тупӑкне мавзолей умӗнчи ҫӳлӗ постамент ҫине вырнаҫтараҫҫӗ. Тупӑк ҫинче Генералиссимус картусӗ.

Хурлӑхлӑ митингра СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗ, КПСС Центральнӑй Комитечӗн Секретарӗ Г. М. Маленков тата Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсем сӑмах каларӗҫ. Хаклӑ ҫулпуҫӑн шанчӑклӑ соратникӗсем И. В. Сталин юлташ тупӑкӗ умӗнче каланӑ сӑмахсем В. И. Ленинпа И. В. Сталин ӗҫӗсем малашне те хӑватлӑн пурнӑҫланса пырассине кӑтартса параҫҫӗ. Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви тата вӗсен руководителӗсем аслӑ Ленинпа Сталин идейисене ҫирӗппӗн пурнӑҫласа пырӗҫ. Ҫакӑн пек шухӑшлать, ҫакна ӗненет, ҫакӑн пек ӗҫлеме тупа тӑвать паян кашни ҫын. Эпӗ те ҫав сӑмахра тӑван республикӑна, хамӑр завод коллективне аса илтӗм. Коммунистсен партийӗ, аслӑ Сталин тӑрӑшнипе ҫеҫ пирӗн республика ҫавӑн пек чечекленекен, пуян та культурӑллӑ республика пулса тӑчӗ. Вӑл тӑрӑшнипе чӑваш халӑхӗ хӑйӗн телейне тупрӗ. Эпир, чӑваш халӑхӗн делегачӗсем, Сталин тупӑкӗ умӗнче вӑл хушса хӑварнине малашне те чыслӑн пурнӑҫласа пыма, Ленин — Сталин партийӗн Центральнӑй Комитечӗпе Совет Правительстви тавра тата тачӑрах пӗтӗҫме, Тӑван ҫӗршыв ырлӑхӗпе мухтавӗшӗн ырми-канми ӗҫлеме, политикӑллӑ сисӗмлӗхе ӳстерсе пыма тупа турӑмӑр.

Сталин тупӑкне Ленин мавзолейне йӑтса кӗнӗ вӑхӑтра совет халӑхӗ Ленин — Сталин партийӗн ретӗсене таса та ҫирӗп тытма, Ленин ялавне коммунизм ҫӗнтерӗвӗ патне ҫитиех ҫӳлте тытса пыма тупа турӗ. Эпир Сталинӑн шанчӑклӑ соратникӗсем ертсе пынипе коммунизм тӑвас задачӑна чыслӑн пурнӑҫлӑпӑр.

Пирӗн халӑх ҫӗршывшӑн ҫак хурлӑхлӑ кунсенче тата та хастарлӑрах ӗҫлет. Ҫакна эпӗ Мускавран хам ӗҫлекен завода таврӑннӑ хыҫҫӑн аван куртӑм. Рабочисемпе работницӑсем, инженерсемпе техниксем стахановла ӗҫлесе пысӑк хурлӑха сӑмӑллатма тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсем халиччен хинчен чӑтӑмлӑрах, пуҫаруллӑрах, сисӗмлӗрех пек туйӑнать. Рабочисемпе работницӑсем партипе правительство руководителӗсен сӑмахне чӗререн ырласа йышӑнаҫҫӗ. Вӗсем Тӑван ҫӗршыв вӑй-хӑватне ӳстерессишӗн ырми-канми ӗҫлеҫҫӗ.

Н. АЛЕКСАНДРОВА,

Шупашкарти электроаппаратура заводӗнчи контролер.

ТӐРӐШСА ӖҪЛЕҪҪӖ

ҪӖМӖРЛЕ. (Телефонпа). «Чӑвашвӑрман» треста пӑхӑнса тӑракан вӑрманпромхозра хурлӑхлӑ митингсемпе пухусем пулса иртрӗҫ. Ҫав пухусемпе митингсенче рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗпе Совет Правительстви тавра тата тачӑрах пӗтӗҫме сӑмах пачӗҫ.

Аслӑ Сталинӑн шанчӑклӑ соратникӗсем Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсем И. В. Сталин тупӑкӗ умӗнче каланӑ сӑмахсем ҫинчен агитаторсемпе пропагандистсем вӑрман хатӗрлекенсене общежитисенче, хӗрлӗ кӗтессенче, ӗҫлевӗ вырӑнта ӑнлантарса параҫҫӗ. Рабочисемпе колхозниксем Тӑван ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн пӗтӗм вӑй-хӑватпа тӑрӑшса ӗҫлеме сунаҫҫӗ.

Парти членӗ Г. Лантев электромеханик электростанцие тӑтти сыпписӗр ӗҫлеттерме, сменӑри рабочисемпе нормӑна 150 процентран кая мар тултарса пыма сӑмах пачӗ. Кабановӑ вӑрман пункчӗнчи обоз заведующийӗ коммунист А. Абашин юлташ кулленхи задание 140—150-шар процент тултарса пыма пулчӗ. А. Егоров лебедчик, А. Староверов тракторист тата ытти механизаторсем те стахановла ӗҫлеме социализмлӑ обязательствӑсем йышӑнчӗҫ.

Пысӑк хурлӑх килсе тухнӑ кунсенче вӑрманпромхоз коллективӗ халиччен пулман тухӑҫлӑхпа ӗҫлет. Мисчӗ вӑрман пункчӗ кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра йывӑҫ турттарса кӑлармалли плана тултарчӗ. Вӑрман пункчӗн коллективӗ пӗррӗмӗш кварталти производство планне мартӑн 25-мӗшӗ тӗлне тултарма, кварталти планран иртерсе 2 пин кубометр йывӑҫ касса хатӗрлеме, 6 пин кубометр турттарса кӑларма, стройкӑсемпе предприятисене плантан иртерсе 100 вагон йывӑҫ ӑсатма социализмла обязательство йышӑнчӗ.

Елӗкрех Речной вӑрман пункчӗ юлса пыратчӗ. Юлашки вӑхӑтра вӑл хӑйӗн ӗҫне самаях лайӑхлатрӗ. Электропӑчкӑна ӗҫлекен М. Кимраков моторист ӗҫ нормине куллен 110—115 процент тултарса пыратчӗ. Ҫак кунсенче вӑл тата тухӑҫларах ӗҫлет. Сурски чугун ҫул ҫинче ӗҫлекен машинистсем пӑравуссене тӗпрен юсаттармасӑр ытларах чуптарасшӑн, йывӑҫ турттармалли задание ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пырассишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Ҫӗмӗрле районӗнчи чылай колхозсем кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра вӑрман хатӗрлемелли плана тултарчӗҫ. Район касӑнӑ йывӑҫа турттарса кӑлармалли плана тултарчӗ, ҫул хӗррине илсе тухмалли задание 95 процент пурнӑҫларӗ. Малта пыракан колхозсем уйӑхлӑх вӑхӑтӗнче паха тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ.

Вӑрманпромхозри парторганизаци вӗркуннепе хӗллехи сезон планне ӑнӑҫлӑн тултарассишӗн коллективӑн пуҫарулӑхӗпе пултарулӑхне тата ытларах вӑйлатма тӑрӑшать.

Т. ТАРАСОВ,

Ҫӗмӗрле вӑрманпромхоз директорӗн политика енӗпе ӗҫлекен заместителӗ.

Ĕмĕр-ĕмĕрех!

(Поэмăран)

1

Тăвать ят: Маркс, Энгельс, Ленин,
Сталин.
Пăхсассăн—шухăш пĕрлĕхĕ çеç мар —
Сăмах янравĕ те пĕр пек, пĕр стайлăн
Эрешленет—ытарайми катмар.

Чуна çĕклен гармони килĕшуллĕ
Вырнаçнă пек тăватă çав ята.
Пĕр юрă, татăлми пĕр витерÿллĕ
Хăватлă юрă илтĕнет унта.

Ĕçсыннисем çĕр çул ытла ĕнерне
Симфони янăрать ăр-ăрусăнах.
Европа çĕрĕх ĕмĕлкен çÿренĕ
Коммунизма куратпăр куçăнах.

Вăл çĕкленет çĕнелнĕ Атăл çийĕн,
Сĕм вăрманта, йăрансăр хирсенче,
Сăртра-тура—мĕнпур Совет Российĕн
Вĕçĕ-хĕррисĕр аслă çĕрĕнче.

Вăл çĕкленет: ун пĕр чикки—Сар тинĕс
Тепри халь—Адриатика таран.
Çулпуçăмăр! Эс вăтăр çул пĕр тикĕс
Истори карапне тытса пыран.

Çак çут тĕнчен тăватă ен пулсассăн,
Кашни енче халь пĕр хĕвел пур пек
Тăватă ят çунса тăрать кун-каçăн
Хальччен пулман чи çутă хĕрÿпе.

2

Эпир Сана а т т е те, т у с та тетпĕр.
Мĕн калаçа епле чĕнсессĕн те,
Сăмахăмăр витмен пек именетпĕр,—
Мĕнле сăнлас-ха шухăш-ĕмĕте?

Ватти, яшши—пĕрре кăна пулин те —
Сана курса юласшăн савăнса.
Сан сассуна илтес килет пурин те,
Санпа виçесчĕ, тетпĕр, пур ăса.

Çĕршывăмăр пĕр чарăнмасăр, вирлĕн
Телей патне çул тытнă хушăрах
Инкек те, хурлăх та пулать-çке пирĕн,
Ун чух каллех Эс—малтанхи сăмах.

Сан ятупа хыпар тăвайнă пултăр —
Сĕм вăрмана е пăрлă шурлăха
Самолетпа анать эмел те тухтăр,
Сан кăмăлу—пурне те ырлăха.

Чăна тухсах пыран таса тупăшăн,
Çын тивĕçне те тăрайман çынна
Çĕршыв хуçи, тĕнче хуçи тумашкăн
Сунса ĕçленĕшĕн—тавах Сана!

Хăвнах курма тивсессĕн, куçма-куçăн
Сăмах хушас пулсан—ниммен малтан
Чăваш йăлипеле эп «тайăн, пуçăм!»
Тесе калайăттăм чунтан-вартан.

3

Сана курманнисем нумай-ха пите,
Пуртех çитеймĕç чун туртан çĕре.
Санпа пĕр самана çынни пулни те —
Тем пысăкăш телей çак тĕнчере.

Эп те Сана курман. Сăнна усратăп:
Утса пыратăн ватă аннупе.
Кавказ çĕршывĕ: сăрт, тăста Кура та
Ем-ешĕл Гори пуль, сенкер тÿпе...

Мухтав çак çĕр çинчи нумай асаплă,
Сăпайлă, тÿсĕмлĕ аннесене!
Вĕсем хĕнпе пустарнă сĕт—сăваплă,
Тумламĕ те ан ÿкĕр çĕр çине.

Хĕрушă пулнă çĕршыври чуралăх!
Анчах упраннă, халăх телейне,
Улпут хресченĕн çемйинче çуралнă
Пулас анну—Геладзе Кĕтерне.

Сана арки çинче пăхса ар тунă
Çав ĕмĕрлĕх таса хĕрарăма
Çĕре çитех пуçа тайса, пĕр унăн
Умне сарайăттăм çак сăвăма.

Аçу рабочи Сан, анну тыр вырнă:
Мăлатукпа çурла пĕчĕкрен пех
Сана вăл курăнна хăватлăн, ырăн
Пулас тĕнчен мухтавлă гербĕ пек.

4

Эс çуралсан грузин йăлипе пенĕ
Пăшал сасси кисретнĕ таврана.
Тусем-сăртсем аслатилле кĕрленĕ —
Час аркатас пек юнлă тирана.

Эс çуралсан, Эс тин тĕнче курсассăн,
Ильич вунна çывхарнă Чĕмпĕрте.
Хуркайăк Çулĕ тăсăлнă каç-каçăн
Кăнтăралла салхуллă çурçĕртен.

Ăна вăл, шухăша кайса, сăнанă:
Тата пĕр улта-çичĕ çул иртсен,
Хăй пиччĕшне сăмах парса каланă:
— Çĕнтерĕпĕр, пĕр харăс çĕкленсен!—

Çавна илтмен-ха Эс, тин çеç палланă
Эрешлĕ Руставели çырупе.
Çул хыççăн çул... Çунат сарлакаланнă:
Эс тытнă ăмăрткайăк çул-йĕрне.

Эс çурални вăл—çăлăнăç. Час тухĕç
Пур чурасем те пусмăр-тĕрмерен.
Сана вĕсем таса ялав пек курĕç
Кирек хăçан та, ĕмĕр-ĕмĕрех!

5

Пур халăх вĕтнĕ паттăртан—пĕр паттăр,
Пĕр вăй пулса Эс килтĕн тĕнчене.
Санра этемлĕх шанчăкне куратпăр,
Санра куратпăр Çĕрĕн телейне.

Ĕмĕртенпе пуçтараннă ăс-хакăл
Сан сăмаху пулса халь çĕнелет;
Сан куçунта йăлтăртатать ялан вăл,
Хĕвел пек саралать пур еннелле.

Ытараймасăр, юратса, хаваслăн
Сана пурин те тав тăвас килет.
Мĕнпур калас сăмахсенчен те аслă
Пире Эс панă ырлăхпа тивлет.

Пур халăх та хăй чĕлхипе «Эс пурăн!
Эс пурăнсан—эп сывă!» тет сана.
Чи витĕмлĕ, чи пархатарлă юррăн —
Чĕре юррин чĕри—пĕр Эс кăна.

Историе Санпа кĕрет çак тапхăр:
Ку—Сталин самани!—тет халь тĕнче.
Сана сума сăватпăр, аслăлатпăр
Пур аслă çутçанталăк умĕнче.

Сан пурнăçу вăл—çĕнтерÿ кун-çулĕ,
Эс сыпăнтартăн ĕмĕтĕмĕре.
Асран кайми яту мухтавлă пулĕ
Кирек хăçан та, ĕмĕр-ĕмĕрех!

Пĕтĕр ХУСАНКАЙ,
Чăваш халăх поэчĕ.

1952

Çураки умĕн

Малта пыракансен сăмахĕ

КÿКЕÇ. Мартăн 11-мĕшĕнче ялхуçалăхĕнче малта пыракансен районти канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу 1952 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен итогне сÿтсе яврĕ тата, Чкаловски районĕнчи ял ĕçченĕсем чĕнсе каланипе паллашса, кăçалхи çулшăн социализмлă обязательство йышăнчĕ.

Иртнĕ çулта районти колхозсем тырпул тухăçлăхне ÿстерес, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе хăшпĕр çитĕнÿсем тунă. Молотов ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕ вăтам шутпа кашни гектартан 16 центнер ытла тĕштырăпа пăрçа йышши культурăсем пухса кĕртнĕ. Уйрăммăн илсен гектартан 17,4 центнер ыраш, 19,3 центнер пăрçа, 21,6 центнер урпа туса илнĕ.

Пысăк çитĕнÿ тунăшăн Молотов ячĕпе тăракан колхоза канашлура Шупашкар райсовет исполкомĕпе парти райкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне пачĕç. Ялава илсе, колхоз председателĕ Данилов юлташ колхозниксен ячĕпе 1953 çулта тата лайăххах ĕçлеме сăмах пачĕ, Хĕрлĕ ялава хăйсен аллинчех хăварма пулчĕ.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз 1953 çулта кашни гектартан 20 центнер тĕштырăпа пăрçа йышши культурăсем, вăл шутран, 20,8 центнер ытла ыраш, 19 центнер ытла çурхи тулă, 1,7 центнера яхăн нумай çул ÿсекен курăк вăррисем туса илессишĕн кĕрешет. Кириллов юлташ ертсе пыракан уй-хир бригади гектар пуçне 22 центнера яхăн тĕштырă, Ефимов тата Яковлев юлташсем ертсе пыракан бригадăсем 23-шер центнертан кая мар ыраш çитĕнтерсе илме сăмах параççĕ.

Колхоз кашни ĕнерен 1.600 литр сĕт суса илме, кашни чăхран 100 çăмарта илме пулать.

Канашлура çавăн пекех «Красный флот» колхоз агрономĕ, парторганизаци секретарĕ Гаврилов юлташ сăмах тухса каларĕ. Артель 1952 çулта тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсене гектартан 15 центнера яхăн туса илнĕ. Иванов юлташ бригади гектар пуçне 17,7 центнер çурхи тулă, Федоров юлташ бригади 217 центнера яхăн çĕрулми пухса кĕртнĕ.

— Чкаловски районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, механизаторсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем чĕнсе каланине сÿтсе явса, кăçал пысăкрах обязательствăсем йышăнтамăр,—тет Гаврилов юлташ.—Сăмахран, Иванов юлташ ертсе пыракан бригада кашни гектартан 25 центнер кĕрхи тулă, Чернышев юлташ ертсе пыракан бригада 225 центнер çĕрулми çитĕнтерсе илме пулаççĕ.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансем «Красный флот» колхозри Филиппова доярка тухса каланине тимлĕн итлерĕç. Вăл кашни ĕнерен вăтам шутпа мĕнле майпа 1.575 литр сĕт суса илни çинчен каласа кăтартрĕ. Доярка уйрăм ĕнесенчен, сăмахран, «Вахта» ятлă ĕнерен 2.100 литр, «Бронза» ятлă ĕнерен 2.200 литр сĕт суса илнĕ. Филиппова юлташ 1953 çулта кашни ĕнерен 1.800 литр сĕт суса илме пулчĕ.

— Партипе правительство ялхуçалăхне хăватлă техника парса тăраççĕ,—терĕ МТС-ра малта пыракан бригадăн бригадирĕ Чунаев юлташ.—Пирĕн тивĕç вăл—тракторсемпе, комбайнсемпе, молотилкăсемпе тухăçлă ĕçлесси пулать.

Чунаев юлташ хăйсен кăçалхи обязательстви çинчен каласа кăтартрĕ. Бригада кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 700 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тума, самоходнăй комбайнпа 375 гектар тырпул пухса кĕртме, молотилкăпа 500 тонна тĕштырă çапма, 3.000 килограмран кая мар горючи перекетлеме, тракторпа тăвакан ĕçсен хăйне ларакан хакне йÿнетме йышăннă.

Канашлу 1953 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă иртерес тĕлĕшпе социализмлă обязательство йышăнчĕ, Сĕнтĕрварри районне ăмăртăва чĕнчĕ.

Ял ĕçченĕсене çĕнĕ çитĕнÿсем тума Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле ĕçĕ, партин XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсем тата Сталин юлташăн съездра тухса каланă сăмахĕ хавхалантарса пыраççĕ. Ленинла-Сталинла Центральнăй Комитет тата Совет Правительстви тавра тачă пĕтĕçсе, аслă çулпуçпа учитель Сталин юлташ хушса хăварнисене ялан асра тытса, колхозниксемпе колхозницăсем, механизаторсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем ĕçри хастарлăха ик-виçĕ хут ÿстерме, мĕнпур вăя коммунизм строительствине пама пулаççĕ.

Чехословаки Республикин президенчĕ Клемент Готвальд чирлени çинчен правительство пĕлтерни

ПРАГА, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакири телеграф агентстви Чехословакири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Президиумĕпе Чехословаки Республики правительствин Президиумĕ пĕлтернине панă. Пĕлтернинче çапла каланă:

Мартăн 12-мĕшĕнче ирхине республика президенчĕ Клемент Готвальд юлташ ÿпке шыçнипе тата плевритпа йывăр чирленĕ. Кăçхине температура 37,7 градус пулнă, юн тымарĕ минутра 108 хут тапнă, юн тапни: пысăк чухне—120, пĕчĕккĕ чухне—80. Клемент Готвальда сыватма мĕнпур кирлĕ мерăсем йышăннă, халĕ те йышăнаççĕ.

Бюллетень çине президента сыватакан врачсем алă пуснă.

Республика президенчĕ Клемент Готвальд юлташ чирлени çинчен çĕрле парти президиумĕпе правительствăна пĕлтернĕ, вĕсем президента сыватасси çине уйрăмах тимлĕн пăхаççĕ.

Президент сывлăхĕ çинчен тата чир мĕнле пыни çинчен медицина бюллетенĕсем кăларса тăраççĕ.

Чехословаки президенчĕн Клемент Готвальдăн сывлăхĕ 1953 çулхи мартăн 13-мĕшĕнче 16 сехет тĕлне мĕнле пулни çинчен пĕлтерекен бюллетень

ПРАГА, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакири телеграф агентстви çапла пĕлтерет:

Мартăн 13-мĕшĕнче Чехословакири Коммунистсен партийĕн председателĕ тата республика президенчĕ Клемент Готвальд юлташăн сывлăхĕ, çĕрле юн тапни сасартăк чакнă пирки тата юн çÿресси вăйсăрланнă пирки, тата ытларах начарланнă. Çийĕнчех эмеллеме тытăннипе юн çÿресси малалла чакассине чарса лартма пултарнă. Апла пулсан та Клемент Готвальд юлташăн сывлăхĕ çаплах йывăр. Юн çÿресси вăйсăрланнине чарса лартма малалла эмеллеççĕ.

Чехословаки президенчĕн сывлăхĕ мĕнле пулни çинчен пĕлтерекен бюллетень

ПРАГА, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакири телеграф агентстви президент сывлăхĕ мартăн 13-мĕшĕнче 21 сехет тĕлне мĕнле пулни çинчен президент Готвальда сыватакан врачсем алă пусса кăларнă бюллетене панă. Унта çапла каланă:

Клемент Готвальд юлташăн сывлăхĕ мартăн 12-мĕшĕнче ирхине сасартăк начарланса çитни кăкăр тăрăхне юн кайнинчен килнĕ, тесе шутлаççĕ. Сывлăхĕ юн илме май парсанах кăкăр тăрăхĕнче пункци туса шĕвĕ юн кăларнă. Хирургсене консилиума чĕнме йышăннă. Эмеллес ĕç малалла пырать. Сывлăхĕ çавăн пекех пулнă, улшăнман.

Ăмăрту сарăлса пырать

ÇĔМĔРЛЕ. Ленин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артель членĕсем çуракине тимлĕн хатĕрленеççĕ. Вăйлă тырпул туса илессишĕн бригадăсем хушшинче социализмлă ăмăрту сарăлнă.

Колхоз правленийĕ çак кунсенче уй-хире тислĕкпе торф ытларах кăларассишĕн тăрăшать. Халĕ уя 4 пин лав тислĕк, çĕршер тонна торф кăларнă, 60 тонна минераллă удобрени турттарса килнĕ, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ нумай пухнă. Минераллă удобренисем тата 40 тонна турттарса килмелле. Бригадăсенчен кашни кунах вуншар колхозник удобренисем турттарнă çĕрте ĕçлет.

Бригадăсем хушшинче ăмăртура И. Ногаев юлташ бригади малта пырать. Иртнĕ кунсенче колхозниксем уя пин лав тислĕк тата торф нумай кăларса купаласа хучĕç.

Пур бригадăсенче те вăрлăхсене иккĕмĕш хут сортласа тасатаççĕ, шăтас пахалăхне тĕрĕслеççĕ. И. Михайлов, А. Игнатьев тимĕрçĕсем ырми-канми ĕçлеççĕ. Вĕсем плугсемпе сеялкăсене юсаса бригадирсем аллине пачĕç.

Ю. МИХАЙЛОВ.

Ĕçри хастарлăха ÿстерессĕ

СĔНТĔР. (Телефонпа). Аслă çулпуçпа учителĕн Иосиф Виссарионович Сталин юлташăн çутă сăнарĕ машина-трактор станцинчи механизаторсене çĕнĕ вăй-хăватпа ĕçлеме хавхалантарать.

Мартăн 9-мĕшĕнче кăçхине район центрĕнчи ĕçсыннисен, Сталин юлташа юлашки çула ăсатнă май, хурлăхлă митингĕ пулса иртрĕ. Кунта МТС-ăн главнăй агрономĕ А. Кушников юлташ çапла каларĕ:

— Ĕмĕрлĕхех уйрăлчĕ пирĕнтен çулпуçăмăрпа аттемĕр Сталин юлташ. Анчах эпир алăмăрсене усмастпăр. Хĕрлĕ площадьри хурлăхлă митингра партипе правительство руководителĕсем Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсем мĕнпур ĕçсыннисене коммунизмшăн татах та хастарлăрах кĕрешме чĕнсе каларĕç. Эпир, машина-трактор станцинчи работниксем, хамăр ĕçри вăй-хăвата ик-виçĕ хут ÿстерме, партин XIX-мĕш съезчĕ колхозсем умне лартнă задачăна срокчен пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлеме пулатпăр.

Совет Союзĕн Германири оккупаци çарĕсен главнокомандующийĕ арми генералĕ Чуйков Британин Хĕвеланăç Германири верховнăй комиссарне Киркпатрика панă протест

Мартăн 12-мĕшĕнче Совет Союзĕн Германири оккупаци çарĕсен главнокомандующийĕ арми генералĕ Чуйков Британин Хĕвеланăç Германири верховнăй комиссарĕ Киркпатрик патне çакăн пек çыру янă:

Британин Хĕвеланăç Германири верховнăй комиссарне
Киркпатрик господина

Сире çакăн çинчен пĕлтерме кирлĕ тесе шутлатăп:

Совет авиацийĕн Шверин районĕнчи чăçĕн командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, вăл пĕлтерĕве эпĕ хам тĕрĕслесе тухрăм, кăçалхи мартăн 12-мĕшĕнче, Берлин вăхăчĕпе 14 сехет те 26 минутра, Бойценбург районĕнче çар самолечĕ-бомбардировщик вĕçсе пынине асăрханă, вăл демаркаци линине пăсса Демократиллĕ Германи Республики территорийĕ çинче Бойценбург—Пархим—Росток (Балти тинĕсĕ хĕрринче) маршрутпа вĕçсе пынă, çапла вара Демократиллĕ Германи Республикин территорийĕ çине 120 километр таран вĕçсе кĕнĕ.

Самолет Демократиллĕ Германи Республикин территорийĕ çине çаплах шалалла вĕçсе пынине кура, çак вăхăтра сывлăшра пулнă Совет Союзĕн икĕ истребителĕ чикĕне пăсакан самолета çывăх аэродром çине анса ларма хăйсем хыççăн пыма сĕннĕ, мĕншĕн тесен совет авиацийĕнче, çавăн пекех тата ытти государствăсен çар авиацийĕнче вăй илсе тăракан правилăсем çавăн пек. Чикĕне пăсакан самолет хăйне çакăн пек законлă йĕркепе хушнине пăхăнман çеç мар тата совет самолечĕсене хирĕç пеме пуçланă.

Вăл çавăн пек хăтланнине кура, совет истребителĕсен тепĕр хут асăрхаттарса пемелле пулнă, анчах чикĕне пăсакан самолет çаплах совет самолечĕсене хирĕç пеме пăрахман. Совет истребителĕсен çак самолета хирĕç хăйсем енчен пемелле пулса тăнă, çакăн хыççăн чикĕне пăсакан самолет аялалла анма пуçланă та Демократиллĕ Германи Республикин территорийĕ çине Шверинран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ÿкнĕ.

Самолет ÿкнĕ вырăнта çĕмĕрĕлнĕ самолет ванчăкĕсене тупнă. Вăл çар самолечĕ—«Авро линкольн» йышши бомбардировщик пулнă, ун çинче Британи самолетне палласа илмелли паллăсем пулнă, унтах Англин çар летчикĕсен тăватă виле ÿтне тупнă, çавăн пекех тепĕр йывăр аманнă летчика тупнă, ăна больницăна вырнаçтарнă. Çĕмĕрĕлнĕ самолет çинче икĕ тупă, пысăк калибрлă пулемет, боеприпассем тата пушă гильзăсем пулнă.

Британин çар самолечĕпе çакăн пек тарăхмалла ĕç пулса иртни çинчен Сире пĕлтерсе, эпĕ Англи çар самолечĕ демаркаци линине — Демократиллĕ Германи Республикин чиккине—пăснине хирĕç Сире протестлени çинчен пĕлтеретĕп.

Совет Союзĕн Германири оккупаци çарĕсен главнокомандующийĕ арми генералĕ ЧУЙКОВ.

1953 çулхи мартăн 12-мĕшĕ.
Берлин.

Тăван çĕршыва йывăç ытларах хатĕрлесе парар!

СССР Союзне малалла аталантармалли программа вăрман промышленность умне пысăк требовани кăларса тăратать. Вăл коммунизмăн аслă стройкисене, халăх хуçалăхне пĕрене, хăма, шпал тата ытти йывăç материалсем ытлăн-çитлĕн парса тăма тивĕçлĕ.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ вăрман промышленноçĕ халăх хуçалăхĕн ÿссе пыракан ыйтăвĕсенчен юлса пынине пĕтерме хушса хăварчĕ. Партипе правительство вăрманпромхозсене пысăк пулăшу параççĕ, вĕсене хăватлă техникăпа хĕçпăшаллантараççĕ, рабочисем валли çĕнĕ поселоксем лартма укçа-тенкĕпе материалсем нумай уйăрса параççĕ. Йывăç хатĕрлес ĕçсене комплекслăн механизацилесси хăвăрт аталанать. Предприятисенче яланхи кадрсен хисепĕ ÿсет.

Апла пулин те вăрманпромхозсем халĕ кăна хăйсен механизмĕсемпе тата кадрĕсене рабочисемпе государство планне тултарса пыма пултараймаççĕ-ха. Çавăнпа правительство кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлевне вăйпитти колхозниксемпе колхозсен туртăм вăйне хутшăнтарма йышăннă.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă историллĕ решенисем, И. В. Сталин юлташ съездра тухса каланă сăмах районти колхозниксемпе колхозницăсен политикăллă активлăхĕпе ĕçри хастарлăхне çĕклерĕç. Вĕсем коммунизм строительствине активлăрах хутшăнма, государство заданийĕсене чыслăн пурнăçласа пыма сăмах пачĕç.

Вăрман хатĕрлемелли сезон пуçланас умĕн районти партипе совет организацийĕсем организациллĕ ĕçсем чылай туса ирттерчĕç. Ял Советсемпе колхозсен председателĕсен тата пуçламăш парторганизацисен секретарĕсен канашлăвĕнче иртнĕ çулхи ĕç итогĕсене тишкерсе тухрăмăр, 1952—1953 çулсенчи плана ăнăçлăн тултарма пулăшакан майсене палăртрăмăр. Канашлу йывăç касса хатĕрлемелли плана 1953 çулхи январь уйăхĕнче, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли тата турттарса кăлармалли плана февраль уйăхĕнче тултарма, Тăван çĕршыва заданирен ирттерсе 10 процент йывăç хатĕрлесе пама пулса социализмлă обязательство йышăнчĕ.

Уйрăмах колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем пысăк ĕç туса ирттернине палăртас пулать. Коммунистсем хăйсен пĕрлехи пухăвĕсенче вăрман хатĕрлеме каякан колхозниксем хушшинче массăлла-агитациллĕ ĕçе йĕркелесси, социализмла ăмăртăва сарасси, ĕç тухăçлăхне ÿстересси çинчен тĕплĕн сÿтсе яврĕç, агитаторсем уйăрчĕç. Кашни колхозрах колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсем пулса иртрĕç. Çав пухусенче ĕçсыннисем плана срокчен тултарма пулăшакан майсене палăртрĕç, социализмла обязательствăсем йышăнчĕç.

Пуçламăш парторганизацисемпе колхоз правленийĕсем бригадăсене ертсе пыма пуçарулла, ĕçе лайăх пĕлекен коммунистсемпе партире тăман колхозниксене уйăрчĕç. Вăрман хатĕрлевне коммунистсемпе комсомолецсем пурĕ 150 çын ытла хутшăнчĕç. Вĕсем чылайăшĕ агитатор, стена хаçачĕсемпе боевой листоксен редакторĕсем пулса ĕçлерĕç. Коммунистсемпе комсомолецсем стахановла ĕçпе, хĕрÿллĕ сăмахпа колхозниксене тухăçлă ĕçлеме хавхалантарса пычĕç.

Агитаторсемпе пропагандистсем пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план, вăрман хатĕрлевĕн халăх хуçалăхĕнчи пĕлтерĕшĕ, коммунизмăн аслă стройкисем çинчен колхозниксене тăтăшах ăнлантарса парса пычĕç. Вăрманта агитаторсем социализмла ăмăртăва пуçарса ертсе пычĕç, дисциплинăна çирĕплетес, ĕçри çитменлĕхсемпе чăрмавсене пĕтерес тĕлĕшпе тимлĕн кĕрешрĕç.

Колхозниксем хушшинче партиллĕ-политикăллă тата массăлла-агитациллĕ ĕçе йĕркелесе ертсе пыма КПСС райкомĕ Кире вăрманпромхозне районти партипе совет активисчĕсене тăтăшах ярса тăчĕ. КПСС райкомĕн секретарĕ Иванов юлташпа пропагандист Харьков юлташ вăрманта темиçе хутчен пулчĕç. Вĕсем Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн материалĕсем тата И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведени тăрăх колхозниксене тăхăр лекци вуласа панă, чылай докладсем ирттернĕ.

Массăллă-культурăллă ĕçе çÿлĕ пусăма хăпартас тесе вăрмана ятарласа уйăрнă культбригада кайрĕ. Вăл концертсем панă, докладсемпе каласусем чылай ирттернĕ. КПСС райкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, вăрмана çичĕ вулав çурчĕн заведующийĕсем кайрĕç. Вĕсем бригадăсемпе общежитисенче стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăларма, бригадирсене кăтарту хăмисем тума, ăмăрту итогĕсене пĕтĕçтерме, малта пыракансен опычĕпе меслетне сарма пулăшрĕç. Районти «Ленин ялавĕпе» хаçат районта вăрман хатĕрлевĕ мĕнле пыни çинчен, малта пыракансен паха тĕслĕхĕсем, колхозсем социализмла обязательствăна мĕнле пурнăçлани çинчен тата ытти материалсем кашни номертех çырса тăчĕ. Хаçат юлса пыракансене, панă сăмаха вăхăтра пурнăçламан руководительсене критиклет, колхозниксене мобилизацилекен умстатьясемпе статьясем чылай пичетлесе кăларать. Районти хаçат номерĕсене çийĕнчех вăрмана çитерсе тăнă. Колхозниксем хаçата пысăк кăмăлпа кĕтсе илеççĕ, вăл вĕрентнипе критикленинчен тивĕçлĕ вывод тăваççĕ, тухăçлăрах ĕçлеме хавхаланаççĕ.

КПСС райкомĕ пуçламăш парторганизацисем вăрман хатĕрлевне мĕнле ертсе пынипе, колхозсем хăйсем йышăннă обязательствăсене мĕнле пурнăçласа пынипе куллен интересленет. Ĕç хăвăртлăхне ÿстерес, çитменлĕхсемпе чăрмавсене хăвăртрах пĕтерес тесе, райком бюровĕн ларăвĕсенче пуçламăш парторганизаци секретарĕсен, ял Совечĕсемпе колхоз председателĕсен 11 докладне сÿтсе явнă. Район йышăннă обязательствăна çителĕксĕр хăвăртлăхсемпе пурнăçланине шута илсе, вăрман хатĕрлевĕ çинчен КПСС райкомĕн пленумĕнче сÿтсе яврăмăр.

Райком бюровĕн членĕсем, партипе совет активисчĕсем тăтăшах пуçламăш парторганизацисенче пулаççĕ, вĕсене партиллĕ-политикăллă тата партиллĕ-организациллĕ ĕçе вăйлатма пулăшаççĕ, малта пыракан парторганизацисемпе колхозсен тата ял Совечĕсен опычĕпе паллаштараççĕ.

Районти ĕçсыннисем Комсомольски районĕнчи колхозниксем вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тата ирттерсе тултарассишĕн социализмла ăмăртăва анлăн сарма чĕнсе каланине пысăк кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Вĕсем чĕнсе калани çине ответлесе, колхозсем вăрмана чылай ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ хушса ячĕç. «Правда», «Алга», «Искра», «Коммунар» колхозсемпе Молотов ячĕпе тата Чапаев ячĕпе тăракан колхозсен членĕсем государство заданине 1952 çулхи декабрĕн 21-мĕшĕ тĕлне пурнăçлама сăмах пачĕç. Колхозниксен сăмахĕ — çирĕп сăмах. Асăннă колхозсем декабрĕн 21-мĕшĕ тĕлне йывăç хатĕрлемелли плана ирттерсе тултарчĕç.

Кунта уйрăмах хăшпĕр пуçламăш парторганизацийĕн паха опычĕ çинчен чарăнса тăрас килет. «Правда» колхозри парторганизаци (секретарĕ А. Яковлев юлташ) государство заданийĕсене пурнăçлассине пĕрмаях пысăка хурса хаклать. Пĕлтĕр çак колхоз вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарнă. Пуçламăш парторганизаци хăйĕн ĕçĕнче иртнĕ çулсенчи паха опытпа анлăн усă курма тăрăшать. Хуçалăхлă задачăсене ăнăçлă пурнăçлассипе активпа тачă çыхăнса тата ун çине таянса ĕçленинчен, колхозниксене хăйсен Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçне лайăх ăнлантарса панинчен килет. Çавна асра тытса, парторганизаци пысăк ĕçсем тума тытăниччен организациллĕ ĕçсем чылай туса ирттерет, агитаторсемпе пропагандистсене тивĕçлĕ заданисем парать, коммунистсене ответлă участоксем çумне çирĕплетет. Кунта вăрман хатĕрлевĕ çинчен коммунистсен, колхозниксен, ял Совечĕпе колхоз правленийĕн ларăвĕсенче, пĕрлехи пухусенче темиçе хут сÿтсе явнă. Пухусемпе ларусем хыççăн коммунистсем йышăннă решенисене пурнăçлама мобилизациленеççĕ.

Вăрман хатĕрлекенсене С. Рожновпа П. Григорьев бригадирсем ертсе пынă. Вĕсем колхозниксен ĕçне тĕрĕс йĕркеленĕ, бригадăсенче çирĕп дисциплина тунă. Вĕсене пуçламăш парторганизаци секретарĕ А. Яковлев юлташпа колхоз правленийĕн председателĕ В. Тимофеев юлташ куллен пулăшса тăнă. Вĕсем вăрманта час-часах пулса колхозниксен ĕçĕпе, пурнăçĕпе тата ыйтăвĕсемпе тĕплĕн паллашнă, социализмла ăмăртăва анлă сарма пулăшнă. Г. Петров, Ф. Меньшиков, А. Яковлева юлташсем ĕç нормине куллен ирттерсе тултарнă, хăйсен опычĕпе ыттисене паллаштарнă. Производствăллă канашлусем ирттерни, çитменлĕхсене çивĕччĕн критиклени, пĕр-пĕрне юлташла пулăшса пыни колхозниксене тухăçлă ĕçлеме май туса панă. Çавна пула колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. Каснă йывăça çул хĕррине илсе тухмалли тата турттарса кăлармалли задание колхоз 1953 çулхи январĕн 5-мĕшĕ тĕлне ирттерсе пурнăçларĕ.

Молотов ячĕпе, Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем тата «Коммунар» колхоз, республикăри малта пыракан ытти колхозсемпе пĕрле, вăрман хатĕрлемелли плана тултарса çитермелли стахановла уйăхлăх ирттерессине пуçаракансем пулчĕç. Асăннă колхозсем уйăхлăхра паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Чапаев ячĕпе тăракан колхозри А. Логинов юлташ ертсе пыракан бригада йывăç касса хатĕрлемелли плана срокчен тултарчĕ. Комсомол организацийĕн секретарĕ Г. Сулаков юлташ, коммунист С. Морозов юлташ, колхозниксем В. Иливановпа В. Юркин юлташсем ĕç нормине 130—150 процент таран тултарса пынă. П. Пушкарев, И. Мартьянов, В. Пушкарев лавçăсем тата ыттисем те пуçарулла ĕçленипе колхоз каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли тата турттарса кăлармалли плана та срокчен ирттерсе тултарчĕ.

«Красная Чувашия» колхоз членĕсем те паха тĕслĕхсем сахал мар кăтартрĕç. А. Челышев коммунист, К. Тихонов, К. Тушников, А. Нанакова колхозниксем ĕç нормине 130—150 процент таран тултарса пынă.

Комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем хуçалăхлă кампанисене ирттерес ĕçе яланах активлă хутшăнаççĕ. Вăрман хатĕрлевĕнче вĕсем пысăк çĕкленÿпе ĕçлерĕç. Уйрăмах «Динамо», «Красная Чувашия», «Алга», Ворошилов ячĕпе тăракан, «Коммунар» колхозсенчи комсомолецсемпе çамрăксен паттăр ĕçне палăртас пулать. Вĕсенчен чылайăшĕ бригадирсем, агитаторсем пулчĕç. «Динамо» колхозри комсомол организацийĕн секретарĕ Н. Трифонов юлташ комсомолецсемпе çамрăксен бригадине ертсе пынă. Çак бригада нормăна куллен ирттерсе тултарса пынă.

Вырăнти Советсене суйламалли кун умĕн районти колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче социализмла ăмăрту çĕнĕ хăватпа вăйланса кайрĕ. Февралĕн 22-мĕшĕ тĕлне район кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман касса хатĕрлемелли плана 23,2 процент, турттарса кăлармалли плана 8,4 процент ирттерсе тултарчĕ.

Районти колхозниксем тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармаççĕ. Малта пыракан колхозсем Тăван çĕршыв валли заданирен ирттерсе йывăç хатĕрлеççĕ.

Районти ĕçсыннисем, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, коммунизм строительствин задачисене чыслăн пурнăçлассишĕн хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр кĕрешĕç.

М. ЕВДОКИМОВ,
КПСС Куславкка райкомĕн секретарĕ.

Тĕнчери лару-тăру

«КĔÇĔН ЕВРОПА» САЛАНСА КАЯССИ ПАТНЕ ÇИТНĔ

Юлашки вăхăтра ют çĕршывсенчи хаçатсем «Европăри оборона пĕрлешĕвĕ» текен агрессиллĕ пĕрлешÿ кун-çулĕ çинчен тĕрлĕ майпа та çырса пăхаççĕ. Вĕсем çырнисенчен сехĕрленсе ÿкни тата малашлăха çухатни курăнать. Хĕвеланăç Европăри империалистла тĕп çĕршывсем хушшинчи хирĕçÿсем ытла та тарăна кайнă, çавăнпа та çак «пĕрлешÿ» членĕсем хушшинчи харкашу ытларах та ытларах вăйланса пырать. «Европăри оборона пĕрлешĕвĕн ултă çĕршывĕ хушшинче пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлес енчен пăхсан пысăк кризис килсе тухни курăнать», — тесе çырать Рим хаçачĕ «Стампа». «Европа çарне тума сахалтан та пĕр ăру пурнăçĕн тапхăрĕ кирлĕ пулать», — тесе хурлăхлăн калать Англи журналĕ «Экономист».

Пурте пĕлеççĕ, «Европăри оборона пĕрлешĕвне» тата «Европа çарне» тума иртнĕ çулхи май уйăхĕнчех Вашингтон хĕтĕртнипе Франци, Хĕвеланăç Германи, Итали, Бельги, Голланди тата Люксембург хушшинче Парижра тунă договор тăрăх палăртнă. Договора ратификацилеме тивĕçлĕ государствăсен парламенчĕсене ярса панă. Ун чухне империалистла пропаганда савăнса çухăрашрĕ.

США-ри пуç пулса тăракан ушкăнсем тата Париж договорĕ çине ала пуснă правительствăсем çак «пĕрлешĕве», унпа пĕрле вара «Европа çарне» те пур майсемпе те хăвăртрах йĕркелесе çитерме тăрăшаççĕ. Анчах çак договора ку таранччен пĕр парламент та ратификацилемен-ха. Çакă çуралма ĕлкĕреймен «пĕрлешĕвĕн» ĕçĕсем ытла та начар пулнă пирки çĕнĕрен тĕрлĕ калаçусем ирттермелле пулса тăнă. Февралĕн малтанхи пайĕнче Лондонра Англипе Франци хушшинче калаçусем пулса иртрĕç. Франци правительствин пуçлăхĕ Мейер «Европа çарне» тăвас ĕçе Англие хутшăнтарма пултараймарĕ. Калаçу вăхăтĕнче Францин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо тăратнă сĕнÿ пирки панă ответра Англи правительстви, Франци представителĕсем темĕн пекех йăлăнчĕç пулсан та, нимĕнле конкретлă обязательство та йышăнмарĕ.

Нумаях пулмасть Парижра «Европа пĕрлешĕвĕн» вăхăтлăх комитечĕ «хушса çырнă протоколсем» тенĕскерне, урăхла каласан, Франци правительстви Парижра тунă килĕшÿсем çумне хушса кĕртнĕ тÿрлетÿсене сÿтсе явма тытăннă. Çак протоколсем Франци «Европа çарне» кĕрекен хăйĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене хăшпĕр енчен тĕрĕслесе тăма ирĕк параççĕ. Протокол авторĕсем каланă тăрăх, ку вăл Хĕвеланăç Германи милитаризмĕ тепĕр хут çĕкленсе тăрас хăрушлăхран сыхланма май парать. Паллă ĕнтĕ, протоколсен тĕп тĕллевĕ вăл—Франци общественноçĕн сыхăлăхне вăйсăрлатасси тата Парижра тунă договора Францин Наци пухăвĕнче çирĕплетме май парасси пулать. Парижра тухса тăракан «Се матэн ле пэй» хаçат кун пирки çапла çырнă: «çак протоколсене йышăнма май килмесен... Франци правительствин договора парламентра ратификацилеме май килесси çинчен шанса тăма пăрахас пулать».

Анчах «хушса çырнисене» кĕртме ку таранччен май килмен-ха «Хушса çырнă» кĕтĕк протоколсене хирĕç те Бонн реваншисчĕсем хытă тăраççĕ, çапла вара вăхăтлăх комитетăн ларăвĕсем нимĕн патне те илсе çитерме пултарайман. Париж договорĕ çумне Франци кĕртекен тÿрлетÿсем пирки пыракан харкашăва февралĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа Рима куçарнă. Унта «Европа пĕрлешĕвне» кĕрекен çĕршывсен представителĕсем пухăннă.

Çакă та паллă, Римра канашлу пуçланиччен темиçе кун маларах Америка финансисчĕсен журналĕ «Уолл-стрит джорнэл» çапла çырнă: Бонн ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин статс-секретарĕ Хальштейн вăрттăн Америкăран пулăшу ыйтнă, вăл Даллеса мĕнле те пулсан Франци хăвăртрах хĕсме тархасланă, Франци хăйĕн ыйтăвĕсене пăртак çăмăллаттăр, тенĕ.

Анчах Америка хĕсни те «Европа пĕрлешĕвĕнчи» е «Кĕçĕн Европа» тенĕскерĕнчи хирĕçÿсене пĕтерме пулăшайман пулмалла. Римри канашлу «Европа çарĕ» тенĕскерне тăвас ĕçе нимĕн чухлĕ те малалла яма пултарайман. Бидо Римра пулнă пресс-конференцире: Франци хăйĕн протоколĕсене каялла илмен, тесе пĕлтернĕ. Аденауэр вара Бона таврăннă хыççăн: Париж договорне «малтан мĕнле ала пуснă, çавăн пек хăвармалла», тенĕ. Конференци ăнăçсăр иртнине ют çĕршывсенчи пур хаçатсем те йышăнаççĕ.

Ĕçсем çакăн пек пулса тухни мĕнрен килнĕ-ха?

Париж договорĕ тăрăх ултă çĕршыв çарне туса хумалла, унăн тĕп чăмăрĕ Хĕвеланăç Германин «вермахчĕ» пулса тăмалла. Италири депутатсен палатин Париж договорне сÿтсе явма уйăрнă комиссийĕнче Пайетта депутат каланă тăрăх, çак «пĕрлешĕве» ăна «Америка Бонн Германиине хĕçпăшаллантарассине вăйлатма хушнине пурнăçлас тата ăна çар ĕçĕсем тĕлĕшĕнчен те, политика ĕçĕсем тĕлĕшĕнчен те пуç пулса тăракан вырăн йышăнса тăмалла тăвас» тĕллевпе кăна тăваççĕ.

Çакă вăл Францири тата Европăри ытти чылай çĕршывсенчи, нумаях пулмасть нимĕç оккупацине тÿссе ирттернĕ çĕршывсенчи, империалистла ушкăнсене хăратать.

Анчах ку тĕп сăлтав мар-ха. Империалистсен Парижри каварне пурнăçа кĕртессине Хĕвеланăç Европăри çĕршывсенчи халăхăн аслă массисем хирĕç тăрасси ÿссе пыни чăрмантарать. Миршĕн тăрăшса, халăхсем Париж тата Бонн договорĕсене ратификацилессине хирĕç татăклăн кĕрешеççĕ. Италире, тĕслĕхрен, нумаях пулмасть Париж договорне хирĕç, наци никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешмелли эрне ирттернĕ. Çак кампание пĕтĕм çĕршыв хутшăннă. Францире предприятисенчи рабочисен коллективĕсем, обществăллă демократиллĕ организацисем Наци пухăвĕн депутачĕсем патне çырусемпе телеграммăсем янă, вĕсем Париж тата Бонн договорĕсене хирĕç сасăлама ыйтаççĕ. Çар договорĕсене ратификацилессине хирĕç массăллă юхăм Хĕвеланăç Германире, Бельгире, Голландире сарăлса пырать. Пур çĕрте те халăх массисен хăватлă сасси илтĕнет, вĕсем: «Пире мир кирлĕ!» теççĕ. Вăрçă кăларма хатĕрленекенсен çак сасăна путарса лартма пултаракан вăйсем çук.

АГРЕССОРСЕМ ЛАПЛАНМАÇÇĔ

Февралĕн 24-мĕшĕнче Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕ тепĕр хут ĕçе тытăнчĕ. Ассамблейăн Политикăллă комитечĕ тÿрех Корея ыйтăвне сÿтсе явма тытăнчĕ. Çак ыйтăва сÿтсе явасси мартăн 11-мĕшĕнче вĕçленчĕ.

Пурте пĕлеççĕ, çак ыйту Генеральнăй Ассамблейăн сессийĕн иртнĕ çул вĕçĕнче пулнă малтанхи пайĕнчех кун йĕркинче тăнă. Анчах ун чухне США-ри пуç пулса тăракан ушкăнсем, хăйсен «сасăламалли машини» пулăшнипе, Корея ыйтăвне мирлĕ майпа йĕркелессине хирĕç пыракан тата Америка интервенчĕсен агрессиллĕ тĕллевĕсене пытарса тăракан резолюци йышăнтарчĕç. Çак резолюцие йышăнтарнă хыççăн, Америкăпа Англи блокĕ Совет Союзĕ Корейăри вăрçă ĕçĕсене халех тата пĕтĕмпех чарса лартасси çинчен панă сĕнĕве сирсе ячĕ. Çапла вара империалистсем Корейăра мир туса хурасшăн мар пулнине тепĕр хут кăтартрĕç.

Ассамблейăн Политикăллă комитетĕнче Корея ыйтăвĕ тăрăх чи малтан Америка делегацийĕн руководителĕ Лодж тухса каланă. Ку вăл агрессиллĕ империализм блокне кĕрекен хăйĕн тусĕсене ку ыйту пирки мĕнле тыткаламалли çинчен астутарни пулнă. Вăл улталлă сăмахсем умĕнче чăрăнса тăман, Корейăра вăрçă пынăшăн ответлăха... Демократиллĕ Корея Халăх Республики, Китай Халăх Республики тата Совет Союзĕ çине йăвантарма пăхнă. Анчах ку та пĕтĕмпех мар-ха. Лодж, тĕнчери общественноçа ÿкĕте кĕртме хăтланса, США-ри пуç пулса тăракан ушкăнсем... мире юратни çинчен икĕпитлĕ сăмахсем каласа тултарнă.

Нумай çĕршывсенчи халăхсем, уйрăмах Инçет Хĕвелтухăçĕнчи халăхсем Америка агрессорĕсем «мире юратни» мĕне пĕлтернине тахçанах ăнланса илнĕ ĕнтĕ. Генеральнăй Ассамблея ĕçе тытăниччен икĕ кун маларах Синьхуа агентстви Корейăра тыткăна илнĕ Америка полковникĕ Ф. Швабл каласа панисене пичетлесе кăларчĕ. Америка полковникĕ Америка интервенчĕсем Корейăра бактериллĕ вăрçă вăрçни çинчен калакан тискер фактсем çинчен пĕлтернĕ. Иртнĕ çулхи январĕн 28-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 25-мĕшне çитиччен хушă вăхăт хушшинче кăна Америка захватчикĕсем бактериллĕ хĕçпăшалпа 400 хут ытла усă курнă.

Политикăллă комитетра Лодж Корея ыйтăвĕ тăрăх фарисейла сăмах каланă вăхăтра, «Нью-Йорк пост» хаçат: «США-н çĕнĕ çул-йĕрĕ — ООН-ра малтанхинчен сивĕрех, Инçет Хĕвелтухăçĕнче — вĕрирех», тесе пĕлтернĕ. Хаçат Лодж ООН-ра «çĕнĕ те хаяр политика» тытма сăмах пани çинчен аса илтерет.

Корея ыйтăвне сÿтсе явни хаçат калани тĕрĕс пулнине çирĕплетрĕ.

ООН-ри Америкăпа Англи блокĕ Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса памалла тăвассине пур майсемпе те сирсе яма тăрăшрĕ, вăл блок çак ыйту тăрăх тивĕçлĕ решени йышăнма памарĕ. Америкăпа Англи блокĕ çавăн пекех тата ООН-ăн Корея тĕлĕшпе ĕçлекен комиссийĕ тенĕскерĕн срокне малалла тăсма тăрăшрĕ. Çак комисси вăл тахçантанпах ĕнтĕ Корейăра вăрçă пуçласа янă çынсемшĕн пĕркенчĕк пулса тăрать.

Совет Союзĕн, Чехословаки, Польша представителĕсем Политикăллă комитетра тата Ассамблея пленумĕнче Корея ыйтăвне сÿтсе явнă чухне тухса каланă хăйсен сăмахĕсенче агрессорсен «çĕнĕ» махинацийĕсене тăрă шыв çине кăларчĕç.

Совет делегацийĕ тепĕр хут Корейăри вăрçă ĕçĕсене халех чарса лартма тата Корея ыйтăвне мирлĕ майпа йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлекен комисси тума сĕнчĕ. Вăл çавăн пекех ООН-ăн Корея тĕлĕшпе ĕçлекен комиссине цĕтересси çинчен резолюци проекчĕ тăратрĕ.

Анчах та Англипе Америка блокĕ, Ассамблейăра хăйсен ытларахăш сасă пулнипе усă курса, совет сĕнĕвĕсене йышăнма памарĕ Çакă «ытларахăш» Корея тĕлĕшпе ĕçлекен комиссине сыхласа хăварасси çинчен решени йышăнчĕ, çакăнпа Генеральнăй Ассамблея Корея ыйтăвне сÿтсе явассине вĕçлерĕ.

Ассамблейăра Америка делегацийĕ тухса калани,— тесе кăтартрĕ Генеральнăй Ассамблейăн пĕрлехи ларăвĕнче Корея ыйтăвĕ тăрăх мартăн 11-мĕшĕнче тухса каланă сăмахра Совет Союзĕн представителĕ А. А. Громыко юлташ,— США правительстви йышăнакан позици пĕтĕмпех суя пулнине кăтартса пачĕ. Сăмахпа пире Корея вăрçине чарса лартма пулни çинчен калаççĕ... ĕçпе вара çак тĕллев патне çитес тĕлĕшпе мĕнле те пулин решени йышăнассине те пĕтерсе параççĕ.

ЙЫВĂРЛАХСЕН ÇУЛĔ ÇИНЧЕ

Юлашки вăхăтра США правительствин членĕсем пĕр хутчен çеç мар хăйсен ялхуçалăхĕ пысăк йывăрлăхсен тапхăрне кĕни çинчен уççăнах калаççĕ.

Ялхуçалăхĕнче ĕçсем мĕнле тăнине США суту-илÿ министерстви нумаях пулмасть 1952 çулшăн пичетлесе кăларнă экономикăллă обзор лайăх кăтартса парать. Обзортан çакă курăнать: апат-çимĕç таварĕсен ваккăн сутакан хакĕ пĕрмаях ÿссе пырать пулсан та, фермерсем хăйсен продукчĕсемшĕн илекен хак 1952 çулхи декабрь уйăхĕнче, 1951 çулхипе танлаштарсан, 12 процент пĕчĕкрех пулнă. «Фектс фор фармерс» бюллетень пĕлтернĕ тăрăх, Америка фермерĕсен таса тупăшĕ 1952 çулта, унччен хи çулхипе танлаштарсан, 99 миллион долларлăх чакнă. 1953 çулта, США çĕрĕç министерстви шутласа пăхнă тăрăх, вăл тата 5 процентран кая мар чакмалла. Фермерсен тупăшĕ чакни промышленноçăн хăшпĕр отраслĕсенче те сисĕнет.

Çĕршывра ялхуçалăх ĕçĕсем начарланни пĕтĕм экономикăна начарлатма пултарассинчен шикленме пуçланă. Америкăри Ĕç федерацийĕн исполкомĕ хăй йышăннă резолюцисенчен пĕринче сехĕрленсе ÿкнине кăтартать, унта: «...Фермерсен тупăшĕ чакни, ăна чарса лартмасан, ялхуçалăхĕ вăйсăрланасси патне илсе пыма пултарать, ку вара хăй черечĕпе пирĕн пĕтĕм экономикăшăн пысăк йывăрлăх кăларса тăратма пултарать. Сехĕрленсе ÿкме пирĕн пур сăлтавсем те пур. Мĕншĕн тесен 1929 çулти экономика кризисĕ умĕн те фермерсен тупăшĕсем çакăн пекех чакса пынă».

Иртнĕ çул Америка фермерĕсем тырпул начарах туса илмерĕç пулсан та, ĕçсем çакăн пек килсе тухнине мĕнпе ăнлантарса пама пулать-ха?

Капитализмла эксплуатаци виçесĕр ÿссе пынă условисенче Америкăри ĕççыннисен пурнăçĕ начарланнăçемĕн начарланса пырать, вĕсен тавар илес пултарулăхĕ пĕрмай чакса пырать. Çĕршывра апат-çимĕç таварĕсем ытлашшипех нумайланса çитнĕ хушăрах, рабочисемпе вĕсен çемйисем выçăллă-тутăллă пурăнаççĕ. Ялхуçалăх продукчĕсене илсе апат-çимĕç таварĕсем хатĕрлекен монополисем, ялхуçалăх продукчĕсем ытлашши пулнипе усă курса, фермерсенчен сутăн илекен чĕртавар хакне йÿнетме тăрăшаççĕ. Хальхи вăхăтра апат-çимĕçшĕн потребитель тÿлекен кашни доллар пуçне фермер 45 цент кăна илет. Ыттисем пĕтĕмпех монополисен кĕсйине кĕреççĕ.

«Юнайтед пресс» агентствин корреспонденчĕ панă ыйту çине ответлесе, США çĕрĕç министерстви çумĕнчи ялхуçалăх экономики бюровĕн начальникĕ Уэлс çапла каланă: «ялхуçалăх таварĕсен хакĕнче тĕпрен улшăну пуласси не Корейăра е ăçта та пулса урăх çĕрте вăрçă операцийĕсене вăйлатсан кăна шанма пулать». Америка империализмĕн сăн-сăпатне çакăнтан уççăнрах урăх нимĕнпе те сăнласа пама çук пулмалла.

А. АЛЕКСАНДРОВ.

ИТАЛИРИ БАТРАКСЕМ ХĂЙСЕН ПРАВИСЕМШĔН КĔРЕШНИ

РИМ, мартăн 13-мĕшĕ (ТАСС). «Аванти» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Италири батраксем ĕç укçине ÿстерессишĕн, ĕç çинчен тунă килĕшÿсемпе законсене хуçасем çинчен пăхăнмалла тăвассишĕн кĕрешĕве вăйлатаççĕ.

Эмили, Ломбарди, Венеци, Пьемонт, Апули тата Кампанья облаçĕсенче 1.050 пин батрак февралĕн 27-мĕшĕнче тата мартăн 3, 5, 7, 9-мĕшĕсенче 2—6-шар сехет хушши забастовка тунă.

Карл Марксăн произведенийĕсене Болгарире пичетлесе кăларни

СОФИЯ, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Болгари хаçачĕсем пролетариатăн аслă учителĕ Карл Маркс вилнĕренпе 70 çул тултарнине палăртаççĕ. Хаçатсем наукăллă коммунизмăн никĕсне хывнă Карл Маркс çинчен, Маркс — Энгельс — Ленин—Сталин вĕрентĕвĕ çинчен статьясем пичетлеççĕ. Хаçатсем коммунизмăн наукăллă никĕсне хывнă Карл Марксăн произведенийĕсем тăрăх Болгари халăхĕн ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн кĕрешекенсен ăрăвĕсем вĕренсе пынине паллă тăваççĕ. Болгарире Карл Марксăн произведенийĕсене 70 хутчен пурĕ 700 пин экземпляр ытла пичетлесе кăларнă. Халăх влаçĕ тунăранпа пролетариатăн аслă учителĕн Карл Марксăн вилĕмсĕр ĕçĕсене 540 пин экземпляр ытла пичетлесе кăларнă. Болгарири пиншер ĕççыннисем Маркс произведенийĕсене аслă шкулсенче, кружоксенче, курссенче тата шкулсенче вĕренеççĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче Халăх çарĕн соединенийĕсемпе Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата тăшман самолечĕсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 4 самолетне персе ÿкернĕ.

Корея патриочĕн паттăр ĕçĕ

ПХЕНЬЯН, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Минчжу Чосон» хаçат отделени командирĕ, Корейăри демократиллĕ çамрăксен союзĕн членĕ Ли Чжен Нам паттăр ĕç туни çинчен пĕлтерет. Вăл Александр Матросовăн вилĕмсĕр ĕçне тепĕр хут тунă.

«854» çÿлĕ вырăншăн çĕрле пынă çапăçура Ли Чжен Нам ертсе пыракан штурмовой группа тăшманăн тĕп узелĕсене çĕмĕрсе тăкнă. Анчах Америкăн йывăр пулемечĕ çак операцие ăнăçлă вĕçлеме чăрмантарса тăнă. Вара Ли Чжен Нам дот патне чупса пынă та тăшман пулеметне граната пăрахса пĕтерме тытăннă. Гранатăсем пĕтсе çитсен, Ли Чжен Нам тăшман пулеметне хăйĕн ÿчĕпе хупланă. Çакă вăл унăн юлташĕсене операцие ăнăçлă вĕçлеме пулăшнă.

„И. В. Сталин кăтартнă çулпа пыма тупа тăватпăр“

ВЕНА, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн Австрири верховнăй комиссарĕ патне вĕçĕмсĕр пыракан çырусенче Австрири ĕççынисем, хăйсем И. В. Сталин юлташ вилнĕ пирки хурланни çинчен пĕлтернипе пĕрлех, мире сыхласа хăварас, Австрипе Совет халăхĕ хушшинчи туслăха тĕреклетес тĕлĕшпе хăйсем мĕн тума пултарнине пурне те тума шантарса калаççĕ.

Графенегри ялхуçалăх рабочийĕсемпе хресченсем çырнă çырура çапла каланă: эпир пĕтĕм тĕнчере мире сыхласа хăварассишĕн тата тĕреклетессишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешме пулни çинчен шантарса калатпăр. Сталин юлташ: Совет Союзĕ çине мĕнле пăхни вăл—кашни тÿрĕ шухăшлă çыншăн тĕрĕслев пулса тăрать, тесе каланă сăмахсене эпир нихçан та манмастпăр.

«Концлагерьсенче ларнă çынсен союзĕн» Нейнкирхенри организацийĕн членĕсем çапла çыраççĕ:

Эпир пĕтĕм тĕнчери рабочи класпа мĕнпур прогрессивлă çынсен тусĕ И. В. Сталин вилни çинчен хурланса илтрĕмĕр. Эпир концлагерьсенче ларса курнă çынсем И. В. Сталин юлташ кăтартса панă çулпа пыма, ирĕклĕхшĕн тата нумай вăхăта пыракан миршĕн кĕрешме тупа тăватпăр.

Освенцим концлагерĕнче ларнă çынсем хăйсен çырăвĕнче: Эпир хамăр ирĕке тухнăшăн тата сывă юлнăшăн мухтавлă Совет Çарĕпе унăн гениллĕ руководительне Генералиссимус Сталина тав тума тивĕçлĕ пулнине нихçан та манмастпăр, тесе çыраççĕ.

Бирмăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтерниччен çакă курăнать: Бирма çарĕсем Бирма территорине гоминдан бандисенчен тасатас тĕлĕшпе операцисене ăнăçлă туса пыраççĕ.

Бирма оборона министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: Салуин юханшывĕн районĕнче çапăçусем пулнă вăхăтра 10 гоминдановеца вĕлернĕ. Гоминданăн темиçе складне вут тивертнĕ.

Италири чугун çул çинчи работниксен забастовки

РИМ, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Италире чугун çул çинче ĕçлекен работниксем 200 пин çын ĕç укçине ÿстерме ыйтса пуçланă забастовка малалла пырать. «Унита» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, чугун çул работникĕсем, Пĕтĕм Италири ĕç конфедерацийĕ тата «Италири ĕçлев союзĕ» чĕнсе каланине йышăнса, пур çĕрте те ĕç пăрахнă. Хăшпĕр станцисемпе чылай провинцисенчи предприятисенче чугун çул работникĕсем 90—99 процент таран забастовка тăваççĕ.

Çул-йĕр министерстви, забастовкăна чарса лартма хăтланса, «чрезвычайнăй план» туса хатĕрленĕ. Вăл Итали чугун çулĕсем тăрăх куллен çÿрекен 6 пин поездран темиçе çĕр поезд хатĕрленĕ. Анчах та çак «чрезвычайнăй» поездсенчен пĕчĕк пайĕ кăна рейса тухма пултарнă.

Правительство хаçачĕсем чугун çул работникĕсемпе вĕсен профсоюз организацийĕсене хирĕç ирсĕр элекле кампани пуçланă. Çапла майпа вĕсем забастовка тăвакансене хăратасшăн. Анчах хаçатсем çапла хăтланнинчен нимĕн те тухман.

АВСТРАЛИ ВЛАÇĔСЕН АГРЕССИЛЛĔ ĔÇĔСЕМ

СИДНЕЙ, мартăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Австралире тухса тăракан хаçатсем паян Австрали ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Кэзи тата Францин пĕрлешнĕ государствăсен ĕçĕсем енĕпе ĕçлекен министрĕ Летурно пĕрле калаçса пани çинчен пĕлтереççĕ. Вĕсем калаçса панинчен Австрали Францин Индо-Китайри колонизаторĕсене çар пулăшăвĕ пама килĕшни курăнать. Мельбурнри «Аргус» хаçат çакна май çапла çырать: «Австрали Франције Индо-Китайра коммунистсене хирĕç кĕрешме хĕçпăшалсемпе çар снаряженийĕ нумай пама йышăннă... Австрали Франци çарĕсене апат-çимĕç нумай тăратма обязательство илнĕ.

Хаçат кăтартса панă тăрăх, парламент депутачĕсем-лейбористсем нумайăшĕ Австрали правительствин çакнашкал ĕçне хирĕç тăраççĕ.

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОФСОЮЗСЕН ФЕДЕРАЦИЙĔ ЧĔНСЕ КАЛАНИ ÇИНЧЕН ТРЕД-ЮНИОНСЕН КОНГРЕСĔ НИМĔН ТЕ ШАРЛАМАСТЬ

ЛОНДОН, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли уоркер» хаçат мартăн 12-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ: Англире шыв илнĕ хыççăн çийĕнчех Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕ Британири тред-юнионсен конгресне телеграфпа Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕ тата унта кĕрекен организацисем «çурт-йĕрсĕр тăрса юлнă рабочисен çемйисене халех материальнăй пулăшу пама хатĕр пулни» çинчен пĕлтерчĕ. Çакă сĕнĕве илни çинчен Британири тред-юнионсен конгресĕ çирĕплетрĕ, анчах вăл çакăн хыççăн нимĕн те туман. Транспорт-хауз (Британири тред-юнионсен конгресĕн штабĕ) представителĕ çак сĕнÿ пирки «Дейли уоркер» хаçат корреспонденчĕ мартăн 11-мĕшĕнче панă ыйтăва хирĕç: эпĕ кун çинчен нихçан та илтмен, тесе каланă.

«Дейли уоркер» хаçат çакна кăтартса парать: Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕ Голландири Пĕрлешнĕ профсоюзсен центрне те çакăн пек сĕнÿ панă пулнă. Вăл çак сĕнĕве çийĕнчех йышăнчĕ. Ăна Голландире шыв тулнипе сиен курнă çынсене пулăшма 5 пин кĕренке стерлинг укçа куçарса панă. Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацине кĕрекен организацисем пур çĕрте те Голландире шыв тулнипе сиен курнă çынсене пулăшма укçа-тенкĕ, килте кирлĕ пулакан япаласем, апат-çимĕç, тумтир, ялхуçалăх машинисем пухаççĕ.

«Дейли уоркер» хаçат çавăн пекех тата Англипе Китай хушшинчи туслăх обществи Китайри чылай организацисенчен телеграмма илни çинчен пĕлтерет. Унта çак организацисем Англире шыв тулнипе сиен курнă çынсене пулăшма укçа-тенкĕ пухни çинчен каланă.

Елчĕк районĕ страховка укçи пухмалли плана тултарчĕ

Госстрахăн Елчĕк районĕнчи инспекцийĕ укçа-тенкĕ пухмалли плана ялан вăхăтра пурнăçласа пырать. Инспекци кăçалхи пĕрремĕш кварталти плана мартăн 1-мĕшĕ тĕлне 112,1 процент, çав шутран ирĕклĕ страховани укçи пухмалли задание 91,6 процент тултарчĕ.

Ăнăçлă ĕçлени старши инспектор В. Тимофеев юлташ ĕçе оперативлă та конкретлă ертсе пынинчен килет. Вăл страховой агентсен тата страховани енĕпе ĕçлекен обществăллă инспекторсен семинарĕсемпе канашлăвĕсене тăтăшах ирттерет, вĕсене ĕçлеме вĕрентет, малта пыракан агентсемпе инспекторсен опычĕпе паллаштарать.

Районти кашни колхозрах страховани тунă пурлăха асăрхаса тăма, пушара хирĕç кĕрешме мерăсем йышăннине тĕрĕслесе тăма постсем уйăрнă. Çав постсене ертсе пыракансен канашлăвĕсене те инспекци час-часах ирттерет.

Страховка укçи пухма тата пурлăха ирĕклĕн страховани тăвас ĕçе анлă сарма обществăллă инспекторсем нумай пулăшаççĕ. Çав вăхăтрах районти страховой агентсемпе налог агенчĕсем те укçа пухас тĕлĕшпе тимлĕ ĕçлеççĕ. Вĕсем ĕççыннисене укçа-тенкĕ парăмĕсене вăхăтра тÿлесе татни усăллă пулни çинчен ăнлантарса параççĕ. Çакă пухмалли укçана вăхăтра пухма май парать.

Госстрах работникĕсен Елчĕк районĕнчи страховой инспекци работникĕсенчен пример илес пулать.

И. ЗОЛОТНИКОВ.

Район центрĕнчи строительство

ЧКАЛОВСКИ. Район центрĕ çултан-çул çĕнелсе, илемленсе пырать. Иртнĕ икĕ çул хушшинче Патăрьелĕнче культура таварĕсем сутакан магазин, кĕнеке магазинĕ, апат-çимĕç сутакан магазин, хаçат-журнал киоскĕ, библиотека çурчĕсене туса лартрĕç.

Çак кунсенче «Гварди» промысла артелĕ çĕнĕ магазин уçрĕ. Районти колхозниксемпе колхозницăсем магазинра кĕпе-тумтир, апат-çимĕç продукчĕсем тата «Гварди» промартель туса кăларакан таварсене туянаççĕ.

Çавăн пекех район центрĕнче кану паркĕ туса пĕтернĕ. Ун йĕри-тавра лайăх карта тытнă, йывăçсем нумай лартса хăварнă.

И. МАТРОСОВ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔ — мартăн 15-мĕшĕнче кăнтăрла чăвашла спектакль **«Висĕ туй»**, каçхине чăвашла спектакль **«Юлиус Фучик»**. Мартăн 16-мĕшĕнче каçхине чăвашла спектакль **«Ялта»**. Кăнтăрлахи спектакль 12 сехетре, каçхи — 20 сехетре пуçланать.

ÇАМРАКСЕН ТЕАТРĔ—мартăн 15-мĕшĕнче кăнтăрла **«Всадник, скачущий впереди»**, каçхине **«Аттестат зрелости»**. Кăнтăрлахи спектакль 14 сехетре, каçхи — 20 сехетре пуçланать

ФИЛАРМОНИ ЗАЛĔ—мартăн 15-мĕшĕнче симфониллĕ оркестр концерчĕ. 21 сехетре пуçланать.

КИНО

«РОДИНА»—мартăн 15-мĕшĕпе 16-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм **«Максимка»**.

«УДАРНИК» — мартăн 15-мĕшĕнче **«Боевые друзья»**.

«ЭЛЕКТРИК»—мартăн 15-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм **«Максимка»**.

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

«Союзпечать» отделенийĕсенче, кашни почтăра хаçат çырăнса илме пулать. Письмоносецсем граждăнсен килĕсенче, хаçат-журнал сарма уйăрнă çынсем — фабрикăсемпе заводсенче, учрежденисенче, шкулсенче, колхозсенче тата МТС-сенче хаçат илсе тăма çырăнтараççĕ.

ХАÇАТ ХАКĔ:

1 çулталăка—52 тенкĕ те 20 пус;
6 уйăха —26 тенкĕ те 10 пус;
3 уйăха —13 тенкĕ те 05 пус;
1 уйăха — 4 тенкĕ те 35 пус.

ШУПАШКАРТИ ТАТА РЕСПУБЛИКАРИ ЭКРАНСЕМ ÇИНЧЕ

„ГОРЯЧЕЕ СЕРДЦЕ“

(А. Н. Островский комедийĕ)

ятлă çĕнĕ илемлĕ фильм-спектакль кăтартма пуçлаççĕ.

Спектакле Государствăн Ленинградри А. С. Пушкин ячĕпе тăракан Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ академиллĕ театрĕ лартнă.

Спектакль режиссĕрĕсем—искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Сталинла премии лауреачĕ В. Кожич тата А. Даусон. Фильм режиссĕрĕ—Г. Казанский.

РОЛЬСЕНЕ ВЫЛЯНА АРТИСТСЕМ:

РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ, Сталинла премии лауреачĕ Г. Мичурин, А. Белоусова, Т. Алешина, СССР халăх артисчĕ, Сталинла премии лауреачĕ А. Борисов, А. Чекаевский, Сталинла премии лауреачĕ К. Калинис, Г. Осипенко, РСФСР халăх артисчĕ, Сталинла премии лауреачĕ К. Скоробогатов, А. Урусов, К. Булатов, Г. Колосов, РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ, Сталинла премии лауреачĕ К. Адашевский, Н. Левицкий.

Фильма Ленин орденлĕ «Ленфильм» киностудийĕ ÿкернĕ.

Экрансем çине «Главкинопрокат» кăларать, 1953 ç.

Шупашкар хулинче К. Иванов урамĕнчи 86-мĕш çуртра пурăнакан Василий Сергеевич Лукиянов арăмĕнчен — Шупашкар хулинче Автономнăй урамри 8-мĕш çуртра пурăнакан Муза Васильевна Алексеевăран уйрăлма ĕç пуçарать. Ĕçе Шупашкар хулинчи 1 мĕш участокри халăх судĕнче пăхса тухаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01033 Типография №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.